Библиотека им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧЕ

1952 çул
Март
12
юнкун
№ 52 (8704)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. Чăваш АССР Верховнăй Советне пухасси çинчен (1 стр.).

Вăрман хатĕрлев планне тултармалли стахановла уйăхлăх (1 стр.).

Уй-хире удобренисем ытларах кăларар! (1 стр.).

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ВИÇÇĔМĔШ СЕССИЙĔ. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ çинчен йышăннă закон. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси çинчен СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин депутат тунă доклад. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси çинчен йышăннă закон. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетни (2 стр.).

Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци Правительствисене панă нота (4 стр.).

Г. Царев.—Наци ыйтăвĕн ленинла-сталинла программи, ăна Совет Союзĕнче ăнăçлă пурнăçлани (3 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. **Колхозсенчи парторганизацисен ĕçне тĕпрен лайăхлатмалла** (3 стр.).

Р. Пашина.—Пирĕн колхозри хĕрарăмсем (3 стр.).

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки

Çултан-çул тĕрекленсе пыракан социализмлă ялхуçалăхĕ умĕнче çĕршыв валли ытли-çитиех тырпул тата апатçимĕç туса илес задача тăрать. Иртнĕ 1951 çулта çĕршыври колхозсемпе совхозсем, çичĕ миллиард та тăватă çĕр миллион пăт тырă пухса илсе, çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç пулин те, çакă вăл пирĕн пуça саварса яма пултараймасть, эпир тунă çитĕнӳсемпе кăшт та киленсе лармa тивĕçлĕ мар. Сталин юлташ темиçе çул каярах: пирĕн колхозлă-совхозлă ялхуçалăхĕн çулсеренех сакăр миллиард пăт таран тырă туса илмелле, тесе лартнă задачăна çитес çывăх вăхăтрах пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешесси — колхозниксемпе ялхуçалăх работникĕсен чи хисеплĕ тивĕçĕ.

Совет çĕршывĕн ялхуçалăхĕ вăйлă та çĕнĕ йышши машинăсемпе пуянланчĕ. Çав машинăсемпе çулсеренех тухăçлăрах та тухăçлăрах ĕçлесе, колхозниксем вăйлă тырпул ӳстерсе илеççĕ.

Социализмлă ялхуçалăхĕ малта пыракан совет науки кăтартса панисем çине таянса тăрать. Пирĕн ялхуçалăх науки вара, хăй те колхозсемпе совхозсенчен вĕренсе пырса, вĕсен çумне çутатса тăрать, вăйлă тырпул ӳстермелли тата йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли майсене кăтартса парать.

Социализмлă ялхуçалăхĕ малта пыракан колхозсемпе совхозсен, МТС-сен тата вĕсенчи новаторсен опычĕ çине таянса, малалла аталанса пырать. Малта пыракансен опычĕ кăтартса панă тăрăх, эпир тырпул тухăçлăхне ӳстермелли, ытларах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли тата унăн тупăшлăхне хăпартмалли çĕнĕ те усăллă меслетсем тупса палăртатпăр.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен, ялхуçалăхĕ валли лайăх та çĕнĕ йышши машинăсем туса кăларакансен опытне анлăн сарасси, ялхуçалăх науки тунă çĕнĕ çитĕнӳсемпе колхозниксен анлă массисене паллаштарса, вĕсене колхозсемпе совхозсен производствине кĕртсе пырасси—хамăрăн ялхуçалăхне малалла вăйлăн аталантарма кирлĕ чи паха условисенчен пĕри пулса тăрать.

Малта пыракансен опычĕ[illegible]арас ĕçре ялхуçалăх выставкисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пирĕн çĕршывра пулса иртекен районсенчи тата областсенчи ялхуçалăх выставкисенче колхозсемпе совхозсем тата уйрăм колхозниксем хăйсем вăйлă тырпул мĕнле пухса илни тата ăратлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕх мĕнле ĕрчетни çинчен каласа параççĕ, ыттисене те хăйсем пек ĕçлеме вĕрентеççĕ.

Малта пыракан колхозсен, машина-трактор станцийĕсен, вăрман лартакан станцисен, совхозсемпе вăрман хуçалăхĕсен, наукăпа тĕпчев учрежденийĕсен, малта пыракан уйрăм çынсен, организаторсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен ӳсĕмĕсемпе опытне анлăн пропагандăлас, вăл опыта колхозсемпе совхозсен производствине кĕртсе пырас шутпа, çавăн пекех тата ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те малалла вăйлатса пырассишĕн массăллă социализмлă ăмăртăва организацилес шутпа Совет Правительстви 1953 çулхи июлĕн 12-мĕшĕнче Мускавра Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине уçма йышăннă.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче хамăр çĕршыври социализмлă ялхуçалăхĕн çитĕнĕвĕсене, пирĕн вăйлă индустри тата колхоз стройĕ пулăшнипе тунă çитĕнӳсене кăтартса памалла. Мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепне йышлăлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне хăвăрт хăпартса пырас, çавăн пекех тата колхозсемпе совхозсен производствин пур отраслĕсене те малалла çĕклемелли чи паха средство пулса тăракан техникăпа ялхуçалăхĕнче нумай тухăçлăн усă курас ĕçре колхозсем, совхозсемпе МТС-сем, наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем тунă ӳсĕмсене Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче тĕплĕн кăтартса памалла.

Кунпа пĕрлех выставкăра колхозсем организаципе хуçалăх енчен тĕрекленсе пыни, колхозсемпе совхозсен производствине комплекслă механизаципе электрификаци кĕрсе пыни, ялхуçалăхĕнче çĕнĕ техникăпа усă курни, машина-трактор станцийĕсен ролĕ ӳссе пыни, ялхуçалăхне тракторсемпе машинăсем, запаслă пайсем, нефть продукчĕсем, минераллă удобренисем тата ыттине те туса паракан чи лайăх промышленность предприятисен çитĕнĕвĕсем курăнса тămалла.

Ялхуçалăхĕнче тата вăрман хуçалăхĕнче квалификациллĕ кадрсем ӳссе пыни те, ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕ валли специалистсем хатĕрлекен чи лайăх вĕренӳ заведенийĕсен ĕçĕ те, çавăн пекех колхозсемпе совхозсем, МТС-сем валли ертсе пыракан кадрсемпе массăллă кадрсем хатĕрлекен чи лайăх шкулсен ĕçĕ те выставкăра тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăрĕ.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставка уйрăммăнах чи лайăх колхозсемпе совхозсен, МТС-сен, ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнче малта пыракан çынсен тата совет ученăйĕсен опычĕпе меслечĕсене усçăн кăтартса парĕ.

Выставкăра пулма право илес тесен, кашниннех пĕтĕм вăя хурса тăрăшса ĕçлемелле. Тырпулсемпе пахча çимĕçсем туса илес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе кăтартса панă тухăçлăха пурнăçа кĕртсен кăна, апа планне тата ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне хăпартмалли планлă задание, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене пурнăça кĕртсен кăна колхозсене, совхозсене, лаша заводĕсене тата ялла районсене выставкăра пулма право параççĕ. Çавăн пекех МТС-сен те, выставкăра пулма право илес тесен, хăйсем ĕçлекен колхозсенче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстермелли плансене тултармалла, государствăна тырпул памалли обязательствăсене тата натуроплата тыррине колхозсем вăхăтра парса татмалла тăвас пулать, тракторсемпе комбайнсене тата ытти машинăсене лайăх пăхса усрамалла, вĕсемпе тĕрĕс усă курмалла, тракторсемпе тумалли тĕп ĕçсен планне колхозсемпе тунă договорсенче кăтартнă срокра пурнăçа кĕртмелле.

Колхозсемпе совхозсен выльăх-чĕрлĕх фермисем, ăратлă выльăх ĕрчетекен рассадниксем, ипподромсем, инкубатор станцийĕсем, зооветучастоксемпе пунктсем, ялхуçалăхĕнчи ремонт мастерскойĕсемпе электростанцисем, вăрман хуçалăхĕсемпе питомниксем хăйсене кăтартса панă планлă заданисене тултарсан кăна выставкăра пулмашкăн право илме пултараççĕ.

Кунсăр пуçне, уйрăм колхозниксем, машина-трактор станцийĕсен, совхозсен тата вăрман хуçалăхĕсен работникĕсем, çамрăк натуралистсем, колхоз председателĕсем, МТС-семпе совхозсен директорĕсемпе вĕсен заместителĕсем, агрономсемпе инженерсем тата механиксем, зоотехникăпа ветеринари работникĕсем тата ялхуçалăхĕнчи ытти работниксем те, вĕсем хăйсене панă заданисене кăтартуллăн тултарсан, çавăн пекех ялхуçалăхĕ валли машинăсемпе минераллă удобренисем тăвакан заводсен работникĕсем те, вĕсем уйрăмах паллă ĕçсем тусан, Ялхуçалăх выставкинче пулма пултараççĕ.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ выставка участникĕсен кăтартăвĕсем мĕнле пулмаллине тĕплĕн палăртса панă. Пирĕн республикăри колхозсемпе совхозсен, выставкăра пулма право илес тесен, гектар пуçне 20 центнертан кая мар кĕрхи тулă, 16 центнертан кая мар сурхи тулă туса илмелле, çав культурăсене акнă çĕр лаптăкĕ 100 гектартан кая мар пулмалла; ырашпа сĕлĕ тата урпа 21 центнертан кая мар туса илмелле, ыраш акнă çĕр лаптăкĕ 150 гектартан кая мар, сĕлĕпе урпа акнă çĕр лаптăкĕ 100 гектартан кая мар пулмалла. Çĕрулми гектар пуçне 250 центнертан кая мар пухса кĕртмелле, унăн лаптăкĕ 40 гектартан сахал мар пулмалла. Уй-хир бригадирĕсен кашни гектар пуçне сахалтан та 23 центнер кĕрхи тулă, 19 центнер сурхи тулă, 23 центнер ыраш, 300 центнер çĕрулми туса илмелле. Пĕтĕм районăн вара кашни гектар пуçне сахалтан та 18 центнер кĕрхи тулă, 15 центнер сурхи тулă, 18 центнер ыраш, çавăн чухлех сĕлĕпе урпа туса илмелле.

Выльăх-чĕрлĕх йышлă ĕрчетсе тата унăн тухăçлăхне хăпартса выставкăра пулас текенсем те нумай вăй хурса ĕçлеме тивĕçлĕ. Çулталăкра фермăри кашни ĕне пуçне вăтамран 2.700 килограмм сĕт суса илекен колхоз, 2.500 килограмм сĕт илекен район тата 3.200 килограмм сĕт илекен колхозниксем кăна выставкăра пулма право илеççĕ. Çавăн пекех тата, выставкăра пулас тесен, колхозра кашни 100 ĕне пуçне 95 пăру пăхса ӳстерни, кашни сурăхран пилĕк килограмм сурă таран çăм касса илни, кашни сысна аминчен вăтамран 18 çура илсе 9 уйăха çитиччен пăхса ӳстерни, кашни 100 кĕсререн 80 тиха илсе пăхса ӳстерни кирлĕ.

Машина-трактор станцийĕсен хăйсем ĕçлекен колхозсенче кашни гектар пуçне сахалтан та 18 центнер кĕрхи тулă, çавăн чухлех ыраш, сĕлĕ, урпа тата 15 центнер сурхи тулă туса илессишĕн кĕрешес пулать.

Выставкăра пулас текенсене 1952 çулхи ĕçсен результачĕсем тăрăх суйласа илеççĕ. Кунпа пĕрлех 1951 е 1950 çулсенче тунă çитĕнӳсемшĕн те выставкăра пулма ирĕк пама пултараççĕ, анчах ун пек чухне колхозпа совхоз, МТС тата ялхуçалăхĕнчи уйрăм работниксем вĕсене 1952 çулта панă планлă заданисене тата обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăça кĕртнипе кĕртменнине шута илеççĕ.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсене хавхалантарас шутпа вĕсене наградăсем памалла тунă. Колхозсене, совхозсене, МТС-сене тата ытти хуçалăхсемпе организацисене пĕрремĕш степеньлĕ диплом—икĕ пин, иккĕмĕш степеньлĕ диплом—пилĕк пин пама палăртнă. Унсăр пуçне, уйрăмах палăрнă колхозсемпе совхозсене, МТС-сене тата ытти хуçалăхсемпе организацисене пама оборудованисемпе машинăсем, радиоузелсем, библиотекăсем, киноустановкăсем тата ыттине те нумай уйăраççĕ. Выставкăра пулакан уйрăм çынсене вара ылтăн медальсемпе кĕмĕл медальсем парса наградăлаççĕ, уйрăмах палăрнисене вара çăмăл автомашинăсем, мотоциклсем, велосипедсем, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, радиоприемниксем тата ытти хаклă япаласем парса премилеççĕ.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки социализмлă ялхуçалăхне малалла вăйлă аталантарса пырас ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрĕ. Вăл пирĕн çĕршывăн пур кĕтессисенче те вăйлă тырпулшăн, йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн пыракан хĕрӳллĕ кĕрешĕве пуçарса ярĕ.

Çав кĕрешĕвĕн чи хĕрӳллĕ, ĕçе татса паракан тапхăрĕсенчен пĕри вăл çуракки вăхăчĕ пулса тăрать. Çавăнпа та колхозсемпе МТС-сен, совхозсен тата мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен кăçалхи çуракине питĕ тĕплĕн хатĕрленсе иртерес тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлес пулать.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче пулма право илессишĕн кĕрешесси—кашни колхозпа совхозăн, кашни МТС-ăн тата кашни ялхуçалăх работникĕн чыслă тивĕçĕ. Вырăнсенчи партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен, республикăри тата районсенчи хаçатсен выставка çинчен ăнлантарса парас, выставкăра пулма кандидата тăратнă хуçалăхсемпе организацисен тата уйрăм çынсен опытне сарас ĕçе анлăн организацилемелле. Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче пулма право паракан условисемпе кăтартусем çинчен ăнлантарса парас ĕçе анлăн туса пымалла, ялхуçалăхĕнче социализмлă ăмăртăва нихçанхинчен ытла вăйлатса ямалла.

Пурте Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче пулассишĕн кĕрешер!

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

Чăваш АССР Верховнăй Советне пухасси çинчен

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕн иккĕмĕш сессине 1952 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиум Председателĕн Заместителĕ
Д. МИТЬКОВ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1952 çулхи мартăн 10-мĕшĕ.

Квартал планне срокчен тултарнă

ПЕРВОМАЙСКИ. Налог агенчĕ Е. Козлова юлташ участокне кĕрекен Шăхач тата Упамса ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас тĕлĕшпе иртнĕ çулта малти ретре пычĕç.

Асăннă ял Совечĕсем кăçал та лайăх ĕçлеççĕ. Пĕрремĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана вĕсем февралĕн 29-мĕшĕ тĕлне иртерсе тултарчĕç. Ял Совечĕсенчи колхозсем государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен тӳлесе пыраççĕ. Шăхач ял Советĕнчи «Сталинград» колхоз 1-мĕш кварталта тупăшран илекен налог укçипе тӳлемелли плана 150 процент тултарнă.

Февралĕн 15-мĕшĕ

Вăрман хатĕрлев планне тултармалли стахановла уйăхлăх

Мартăн 15-мĕшĕ

«Чăвашвăрман» трест тата ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, 1951—1952 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата иртерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

КРАСНОАРМЕЙСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

44. **«Красная Шатьма» колхоз** (председателĕ **А. Иванов** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **Е. Якимов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 107,6 процент, турттарса кăлармалли плана—102,0 процент тултарнă.

ЭЛĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

45. **Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. Морозов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Н. Моляков** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **Г. Виноградов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,8 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана—104,7 процент, турттарса кăлармалли плана—146,3 процент тултарнă.

ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

46. **«Красный флот» колхоз** (председателĕ **П. Григорьев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **И. Гаврилов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,2 процент, турттарса кăлармалли плана—102,0 процент тултарнă.

Кашни колхоз плана тултарма тивĕç

Чурачăк районĕнчи чылай колхозсем вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе юлса пыраççĕ. Вĕсем уйăхлăх вăхăтĕнче те ĕçре тăтăклă улшăну тумарĕç. Чуракассинчи «Мотор» колхоз каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли тата турттарса кăлармалли плана çуррине те тултарман. Апла пулин те вăрманта икĕ лавçă çеç ĕçлеççĕ. Ытти лавçăсем çăварни тума килĕсене таврăннă та халиччен те вăрмана ĕçлеме каймаççĕ. Колхоз председателĕ М. Филиппов юлташ государство заданине пурнăçлассишĕн ответлăх туймасть, колхозниксене вăрман хатĕрлевне хутшăнтарма тăрăшмасть.

Тата тепĕр тĕслĕх. «Герой» колхоз каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 28 процент, турттарса кăлармалли плана 40 процент çеç тултарнă. Плана çак уйăхра тултарас тесен, куллен 10 çын сурая, 18 çын лавпа ĕçлемелле. Халĕ вăрманта пĕр çын та ĕçлемест. Колхоз председателĕ Я. Ильин юлташ кĕркуннеренпе вăрмана кайса курман. Райсовет исполкомĕнчен вăрмана ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ кăларса ярасси çинчен асăрхаттарсан, Ильин юлташ «Ыранах массăллăн тухса кайтпăр», тесе лăплантарса пурăнчĕ.

Пĕр-ик эрнерен çуна çулĕ пăсălма пултарать. Хальхи лайăх çанталăкпа усă курмасан, кайран колхозниксене хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне пурнăçлама йывăр пулать. Районти юлса пыракан колхозсен вăрман хатĕрлемелли плана тултарма татăклă мерăсем йышăнас пулать.

И. ПАВЛОВ.

Вăрман хатĕрлемелли плана тултарнă

ПĂРАЧКАВ. Районти колхозсем вăрман хатĕрлемелли сезонти плана тултармалли стахановла уйăхлăха хутшăнса хастарлă ĕçлерĕç. Уйăхлăх пуçлансанах кунта вăрман ĕçлеме килекенсен хисепĕ нумай ӳсрĕ. Чылай колхозсенче вăрман касакансен, турттаракансен бригадисене ертсе пыма коммунистсене, ĕçчен колхозниксене çирĕплетнĕ. Çав бригадăсем стахановла уйăхлăх вăхăтĕнче сезонти плана пĕтĕмĕшпех тултарма, Тăван çĕршыва планран иртерсе йывăç хатĕрлесе пама обязательствăсем илчĕç.

«Трактор» колхоз (председателĕ П. Игожин юлташ) уйăхлăха чи малтан хутшăнчĕ. Кунта вăрманта ĕçлекен колхозниксене парторганизаци секретарĕ Ф. Чекалин юлташ тата комсомол организацийĕн секретарĕ Н. Леонтьев юлташ хăйсем ертсе пычĕç, ĕçре лайăх тĕслĕх кăтартса çитĕнӳсем тума пулăшрĕç. Колхоз Тăван çĕршыва планран иртерсе çĕршер фестметр йывăç касса тата турттарса пачĕ. Халĕ вĕсем планран иртерсе йывăç касса хатĕрлеççĕ.

Стахановла уйăхлăхра Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Н. Куторкин юлташ) членĕсем ывăна пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Вăрман хатĕрлемелли плана иртерсе тултарнă пулин те колхозниксем вăрман хатĕрлевĕнче хавхаланса ĕçлеççĕ.

Максим Горький ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан, «Красный пахарь», «Ударник» колхоз членĕсем планран иртерсе йывăç касса хатĕрлеççĕ.

Пăрачкав районĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана мартăн 9-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Районти колхозсем 20.400 кубометр йывăç турттарнă, çакă вăл сезон планĕн 102 процентчĕ пулать. Çул хĕррине илсе тухмалли плана 102,7 процент тултарнă е 14.380 кубометр йывăç турттарса кăларнă. Хатĕрлемелли плана 100,1 процент пурнăçланă е 32.050 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ.

Районти колхозсем Тăван çĕршыва йывăç тата ытларах хатĕрлесе парас ĕмĕтпе вăрманта тăрăшса ĕçлеççĕ.

Р. ЕВГРАФОВ,
Вăрманпромхоз директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

Уй-хире удобренисем ытларах кăларар!

* * * *

Удобренисене уя кăларассине организацилемен

КОМСОМОЛЬСКИ. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстермелли чи хăватлă майсенчен пĕри вăл—уй-хире вырăнти удобренисем ытларах кăларни пулать. Çакна лайăх ăнланнă колхоз руководителĕсем хире ытларах тислĕк кăларма тăрăшаççĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ хĕллехи агротехникăллă ĕçсен çирĕп планне тунă. Уй-хир бригадисем çав плана вăхăтра пурнăçласа пыраççĕ. Хире тислĕк кăларнă çĕрте куллен 20—30 лавран кая мар ĕçлет. Тислĕке лавăн-лавăн сапаласа тăкмаççĕ, агротехника кăтартнă пек пысăк купасем туса, лайăх çĕртме тăрăшаççĕ. Удобрени хатĕрлес ĕçре Калинин ячĕпе, Ульянов ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем те лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ.

Анчах та çакăн пек лайăх тĕслĕхсем районта сахал. Удобрени хатĕрлесе уя кăларас тĕлĕшпе район юлса пырать. Мартăн 10-мĕшĕ тĕлне плана 20 процент ытларах кăна тултарнă.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ хире тислĕк кăларас тĕлĕшпе лайăх решенисем йышăннă. Анчах вăл решенисене пурнăçлама колхозниксене мобилизацилемен. Бригадирсем пуçарулăх кăтартмаççĕ. Митюковпа Дерягин юлташсем ертсе пыракан бригадăсенче сайра хутра çеç уя тислĕк турттараççĕ.

Колхоз руководителĕсем вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕç çине йĕрĕнсе пăхаççĕ, ăна кирлĕ пек сыхласа усрамаççĕ. Ферма картишĕнчи тислĕке, тăкма çывăх тесе, Кĕтне шывĕн хĕррине кăлараççĕ, ăна, паллах, çуркунне шыв юхтарса каять. Колхозра кашни çулах тислĕке ял çывăхне çеç, лавăн-лавăн сапаласа тăкаççĕ, компостсем тумаççĕ. Инçетри уйсене вара вунă çул ытла ĕнтĕ тислĕк тăкса çемçетмен.

Фермăсем патĕнче, колхозниксен килĕсенче тислĕк нумай. Колхоз район центрĕнчен те темĕн чухлĕ удобрени турттарма пултарать.

Киров ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ те хире тислĕк кăлармалли планăн чĕрекне те тултарман. Çав вăхăтрах витесем патĕнче темиçе çулхи тислĕк купаланса выртать. Тислĕке уя кăларас вырăнне, сурхи шывпа юхтарса ярас шутпа, ăна Кĕтне шывĕ хĕррине тăкаççĕ.

«Алга» колхозра тислĕке витесенчен 200—300 метра турттарса кăларнă та районти ялхуçалăх пайне 2.400 лав тислĕк кăларнă тесе пĕлтернĕ. Тĕрĕссипе пин лав ытларах çеç удобрени кăларнă. Колхоз правленийĕ удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе кашни бригада валли график çирĕплетмен. Колхоз руководителĕсем ку ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса лараççĕ. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пухасси те япăх пырать. Бригадăсем хăйсен акмалли çĕр лаптăкĕ хăш уйра пулассине те пĕлмеççĕ. Çавна пулах пур бригадăсем те пĕр бригадăн участокĕ çине удобрени кăлараççĕ.

Иртнĕ кĕркунне хăшпĕр вырăнсенче ыраш калчисем начар аталанса юр айне кĕчĕç. Çавăнпа та кăçал калчасене çуркунне апат пани питĕ хаклă, çав ĕçе тума тĕплĕ хатĕрленмелле. Чылай колхозсем калчасене апат пама кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл, минераллă удобренисем хатĕрлеме васкамаççĕ. «Светлая жизнь», «Родина» ялхуçалăх артелĕсем çав удобренисене пухассине пачах организацилемен. Районти колхозсенчен суррийĕ минераллă удобренисем пĕр центнер та кӳрсе килмен.

Районти колхозсенче хире тислĕк кăларас, ытти удобренисем хатĕрлес ĕç çавăн пек калама çук япăх пыни чи малтанах районти ялхуçалăх пайĕ начар ĕçленипчен килет. Вăл колхоз руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсенчен çак тĕлĕшпе кирлĕ пек ыйтмасть. Районта кашни икĕ колхоза пĕр агроном тивет. Çакă вăл пысăк вăй. Анчах вĕсенчен чылайăшĕ колхозсенче хĕллехи агротехникăллă ĕçсем çинчен калаçнипех иртерсе яраççĕ, ĕçе организацилеме, колхозниксен массисене мобилизацилеме пулăшмаççĕ.

Сурăки çывхарса килет. Юлнă вăхăтпа туллин усă курса, Комсомольски районĕнчи колхозсен хире удобренисем кăларас ĕçе лайăхлатмалла.

Н. КВАСОВ,
А. ЕРЕМЕЕВ.

*

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕМ УЙ-ХИРЕ УДОБРЕНИ КĂЛАРМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

1952 çулхи мартăн 10-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

	РАЙОНСЕМ	Уй-хире тислĕк кăларнă
1.	Хĕрлĕ Чутай	45,0
2.	Муркаш	32,9
3.	Вăрнар	31,9
4.	Çĕрпӳ	28,8
5.	Сĕнтĕрвăрри	27,9
6.	Елчĕк	27,5
7.	Шăхасан	26,5
8.	Красноармейски	23,6
9.	Улатăр	23,3
10.	Октябрьски	23,1
11.	Калинино	23,0
12.	Сĕнтĕр	22,8
13.	Чурачăк	22,8
14.	Канаш	22,3
15.	Комсомольски	21,8
16.	Чкаловски	21,2
17.	Йĕпреç	20,7
18.	Тăвай	20,2
19.	Ишлей	19,5
20.	Первомайски	18,9
21.	Етĕрне	18,8
22.	Элĕк	18,1
23.	Куславкка	18,1
24.	Советски	16,9
25.	Пăрачкав	13,8
26.	Çĕмĕрле	13,0
27.	Шупашкар	12,3
28.	Вăрмар	11,5
29.	Кувакино	10,6
30.	Шăмăршă	1,6

Вăйлă тырпулшăн тăрăшаççĕ

ВĂРНАР. «Победа» колхоз 1950 çулхи кĕркунне пĕрремĕш хут «Ульяновка» сортлă кĕрхи тулă акса хăварчĕ. Колхозниксем агротехникăллă ĕçсене тĕрĕс пурнăçласа пыма тăрăшрĕç. Çĕртме пуссине кашни гектар çине 60-шар лав тислĕк кăларнă, çу каçа лайăх кăпкалатса тăнă. Хĕлле калча çинче юр тытса хăварнă. Калча лайăх хĕл каçрĕ. Ăна çуркунне гектар пуçне 1,5 центнер сульфат аммонийĕ сапса апат панă, сӳреленĕ. И. Ефремов юлташ ертсе пыракан бригада иртнĕ çулта кашни гектартан 37,25 центнер кĕрхи тулă пухса кĕртрĕ.

Колхозниксем кăçал пĕлтĕрхинчен пысăкрах тухăçлă кĕрхи тулă туса илме тăрăшаççĕ.

Л. ИЛЬИН.

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ВИÇÇĔМĔШ СЕССИЙĔ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ çинчен йышăннă

ЗАКОН

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1. СССР Министрĕсен Совечĕ çирĕплетме тăратнă ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетне, Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕсен доклачĕсем тăрăх йышăннă улăштарусене шута илсе, çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес: тупăшсем пĕтĕмпе 509.911.608 пин тенкĕ, расходсем пĕтĕмпе — 476.920.588 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 32.991.020 пин тенкĕ ытларах пулмалла. Республикăсен бюджечĕсемпе выранти бюджетсенчи укçа-тенкĕн тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2.962.710 пин тенкĕ пулмалла.

2. Çак Законăн пĕрремĕш статьипе килĕшÿллĕн, пĕтĕм Союзăн 1952 çулхи бюджетне тупăшсем 411.154.661 пин тенкĕ, расходсем 378.163.641 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 32.991.020 пин тенкĕ ытларах пулмалла туса çирĕплетес.

3. Союзлă республикăсен 1952 çулхи государство бюджечĕсем çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес:

	Тупăшсем (пиншер тенкĕ)	Расходсем (пиншер тенкĕ)
Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республики	54.716.358	54.716.358
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	37.764.343	13.016.102
выранти бюджетсем	16.952.015	41.700.256
Украина Советлă Социализмлă Республики	17.538.195	17.538.195
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	13.512.235	5.629.250
выранти бюджетсем	4.025.960	11.908.945
Белорус Советлă Социализмлă Республики	3.718.386	3.718.386
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	3.346.711	1.101.415
выранти бюджетсем	371.675	2.616.971
Узбек Советлă Социализмлă Республики	3.337.449	3.337.449
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	2.599.790	1.327.400
выранти бюджетсем	737.659	2.010.049
Казах Советлă Социализмлă Республики	4.427.499	4.427.499
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	3.852.916	2.016.577
выранти бюджетсем	574.583	2.410.922
Грузи Советлă Социализмлă Республики	2.747.417	2.747.417
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	2.400.467	1.257.508
выранти бюджетсем	346.950	1.489.909
Азербайджан Советлă Социализмлă Республики	1.983.489	1.983.489
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	1.638.909	829.107
выранти бюджетсем	344.580	1.154.382
Литва Советлă Социализмлă Республики	1.471.051	1.471.051
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	1.277.395	652.957
выранти бюджетсем	193.656	818.094
Молдаван Советлă Социализмлă Республики	1.161.958	1.161.958
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	935.114	529.928
выранти бюджетсем	226.844	632.030
Латви Советлă Социализмлă Республики	1.414.976	1.414.976
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	1.068.283	714.681
выранти бюджетсем	346.693	700.295
Киргиз Советлă Социализмлă Республики	1.066.516	1.066.516
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	918.096	469.367
выранти бюджетсем	148.420	597.149
Таджик Советлă Социализмлă Республики	1.012.919	1.012.919
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	864.767	440.832
выранти бюджетсем	148.152	572.087
Армени Советлă Социализмлă Республики	1.273.433	1.273.433
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	1.146.062	691.504
выранти бюджетсем	127.371	581.929
Туркмени Советлă Социализмлă Республики	983.171	983.171
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	874.479	474.353
выранти бюджетсем	108.692	508.818
Эстони Советлă Социализмлă Республики	1.059.280	1.059.280
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	874.423	607.160
выранти бюджетсем	184.857	452.120
Карело-Финн Советлă Социализмлă Республики	844.850	844.850
Вăл шутран:		
республика бюджечĕ	788.607	620.063
выранти бюджетсем	56.243	224.787
Республикăсен бюджечĕсемпе выранти бюджетсем пĕтĕмпе	98.756.947	98.756.947
Вăл шутран:		
республика бюджечĕсем	73.862.597	30.378.204
выранти бюджетсем	24.894.350	68.378.743

4. Республикăсен бюджечĕсемпе выранти бюджетсенчи укçа-тенкĕн тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне çакăн чухлĕ пулмалла тăвас: РСФСР-та—1.641.491 пин тенкĕ, Украина ССР-ĕнче—526.146 пин тенкĕ, Белорус ССР-ĕнче—111.522 пин тенкĕ, Узбек ССР-ĕнче—100.123 пин тенкĕ, Казах ССР-ĕнче—132.825 пин тенкĕ, Грузи ССР-ĕнче—82.423 пин тенкĕ, Азербайджан ССР-ĕнче—59.505 пин тенкĕ, Литва ССР-ĕнче—44.132 пин тенкĕ, Молдаван ССР-ĕнче—34.859 пин тенкĕ, Латви ССР-ĕнче—42.449 пин тенкĕ, Киргиз ССР-ĕнче—31.995 пин тенкĕ, Таджик ССР-ĕнче—30.388 пин тенкĕ, Армени ССР-ĕнче—38.203 пин тенкĕ, Туркмени ССР-ĕнче—29.495 пин тенкĕ, Эстони ССР-ĕнче—31.778 пин тенкĕ, Карело-Финн ССР-ĕнче—25.346 пин тенкĕ.

5. 1952 çулта Республикăсен бюджечĕсенчен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикăсен бюджечĕсене тата выранти Советсен бюджечĕсене çакăн чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрса памалла туса çирĕплетес:

	(Пиншер тенкĕпе)
Россия Советлă Федеративлă Социализмлă Республики	24.748.241
Украина Советлă Социализмлă Республики	7.882.985
Белорус Советлă Социализмлă Республики	2.245.296
Узбек Советлă Социализмлă Республики	1.272.390
Казах Советлă Социализмлă Республики	1.836.339
Грузи Советлă Социализмлă Республики	1.142.959
Азербайджан Советлă Социализмлă Республики	809.802
Литва Советлă Социализмлă Республики	624.438
Молдаван Советлă Социализмлă Республики	405.186
Латви Советлă Социализмлă Республики	353.602
Киргиз Советлă Социализмлă Республики	448.729
Таджик Советлă Социализмлă Республики	423.935
Армени Советлă Социализмлă Республики	454.558
Туркмени Советлă Социализмлă Республики	400.126
Эстони Советлă Социализмлă Республики	267.263
Карело-Финн Советлă Социализмлă Республики	168.544
Пĕтĕмпе	43.484.393

6. Пĕтĕм Союзра пухăнакан государство налогĕсемпе тупăшĕсенчен 1952 çулта республикăсен бюджечĕсене тата выранти бюджетсене çакăн чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрса памалла тăвас:

а) [illegible] илекен налог пухăннинчен: РСФСР-та—4,1 процент, Украина ССР-ĕнче—[illegible],5 процент, Белорус ССР-ĕнче—25,7 процент, Узбек ССР-ĕнче—2,1 процент, Казах ССР-ĕнче—29,3 процент, Грузи ССР-ĕнче—22,3 процент, Азербайджан ССР-ĕнче—11,9 процент, Литва ССР-ĕнче—31,6 процент, Молдаван ССР-ĕнче—15,9 процент, Латви ССР-ĕнче—1,1 процент, Киргиз ССР-ĕнче—26,9 процент, Таджик ССР-ĕнче—17,3 процент, Армени ССР-ĕнче—37,8 процент, Туркмени ССР-ĕнче—19,8 процент, Эстони ССР-ĕнче—13,9 процент, Карело-Финн ССР-ĕнче—51,0 процент;

б) халăхран тупăш тăрăх илекен налог, колхозниксемпе единоличниксенчен илекен ялхуçалăх налогĕ—25 процент;

в) колхозсенчен тупăш тăрăх илекен налог, ССР Союзĕнчи мăшăрланман, пĕчĕк çемьеллĕ гражданесенчен илекен налог, пурăнакан тата сахал йышлă çемьеллĕ гражданесенчен илекен налог, вăрман тупăшĕ тата халăх хушшинче вырнаçтарнă государственнăй заемсен укçи пухăннинчен—50 процент;

г) машина-трактор станцийĕсен тупăшĕсенчен РСФСР-та, Украина ССР-ĕнче, Белорус ССР-ĕнче, Казах ССР-ĕнче, Грузи ССР-ĕнче, Азербайджан ССР-ĕнче, Литва ССР-ĕнче, Молдаван ССР-ĕнче, Латви ССР-ĕнче, Киргиз ССР-ĕнче, Таджик ССР-ĕнче, Армени ССР-ĕнче, Туркмени ССР-ĕнче, Эстони ССР-ĕнче, Карело-Финн ССР-ĕнче—25 процент, Узбек ССР-ĕнче—10 процент.

Таварлă мар операцисенчен илекен налог тăрăх пухăннă укçа-тенке 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тÿрех выранти бюджетсене памалла.

7. ССР Союзĕн 1950 çулхи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен çырнă отчета, унта тупăшсем 422.767.710 пин тенкĕ, расходсем 413.236.606 пин тенкĕ пулнипе, тупăшсем расходсенчен 9.531.104 пин тенкĕ ытларах пулнипе çирĕплетес.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1952 çулхи мартăн 8-мĕшĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси çинчен йышăннă

ЗАКОН

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1. СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1951 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче «Таджик ССР-ĕнчи Сталинабад облаçне пĕтересси çинчен» кăларнă Указа тата 1951 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче «Грузи ССР-ĕнче Тбилиссипе Кутаиси облаçĕсене туса хурасси çинчен» кăларнă Указа çирĕплетес.

Çавна май, СССР Конституцийĕн 25-мĕшпе 27-мĕш статьисене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушса çырнисем кĕртсе, ку статьясене çапла çырас:

«25 статья. Грузи Советлă Социализмлă Республикине Кутаисипе Тбилиси облаçĕсем, Абхаз тата Аджар Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикисем, Кăнтăр Осети автономиллĕ облаçĕ кĕреççĕ».

«27 статья. Таджик Советлă Социализмлă Республикине Гарм, Куляб, Ленинабад облаçĕсем тата Горно-Бадахшан автономиллĕ облаçĕ кĕреççĕ».

2. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн çак Указĕсене çирĕплетес: 1951 çулхи мартăн 14-мĕшĕнче «СССР Хула строительстви министерствине пĕтересси çинчен», 1951 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче «Государствăн апат-çимĕçсемпе пурлăхсен резервĕсен министерствине пĕтересси çинчен» тата 1951 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче «СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитетне туса хурасси çинчен» кăларнă Указĕсене.

Çавна май СССР Конституцийĕн 70-мĕшпе 77-мĕш статьисене çакăн пек улшăнусемпе хушса çырнисем кĕртес:

70-мĕш статьяна «СССР Министрĕсен Совечĕн строительство ĕçĕсем енĕпе ĕçлекен Государственнăй Комитечĕн Председателĕ» тесе çырнинчен малалла «СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитечĕн Председателĕ» тесе хушса çырас.

77-мĕш статьяран «Хула строительстви» тата «Государствăн апат-çимĕçсемпе пурлăхсен резервĕсен» сăмахсене кăларас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1952 çулхи мартăн 8-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СССР МИНИСТРĔСЕНЕ УЙĂРСА ЛАРТНИ ÇИНЧЕН КĂЛАРНĂ УКАЗĔСЕНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ

Советлă Социализмлă Республикăсен Верховнăй Совечĕ СССР Верховнăй Совет Президиумĕн министрсене уйăрса лартни çинчен кăларнă çак Указĕсене çирĕплетет:

СССР Электропромышленность министрĕ пулма—Дмитрий Васильевич **Ефремова**;

СССР Апат-çимĕç промышленность министрĕ пулма—Иван Кузьмич **Сиволапа**;

СССР Тинĕс-Çар министрĕ пулма—Николай Герасимович **Кузнецова**;

ССР Союзĕн Тулашри суту-илÿ министрĕ пулма—Павел Николаевич **Кумыкина**;

СССР Ялхуçалăх машиностроенин министрĕ пулма — Сергей Александрович **Степанова**.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1952 çулхи мартăн 8-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ ÇУМĔНЧИ ИСКУССТВĂСЕН ĔÇĔСЕН КОМИТЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ ПУЛМА Н. Н. БЕСПАЛОВ ЮЛТАША УЙĂРСА ЛАРТНИ ÇИНЧЕН КĂЛАРНĂ УКАЗНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ çапла **йышăнать:**

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи искусствăсен ĕçĕсен комитечĕн председателĕ пулма Николай Николаевич **Беспалов** юлташа уйăрса лартни çинчен кăларнă Указа çирĕплетес.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1952 çулхи мартăн 8-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН АПАТ-ÇИМĔÇСЕМПЕ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ТАВАРĔСЕМ ПАРСА ТĂРАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН ГОСУДАРСТВЕННĂЙ КОМИТЕЧĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ ПУЛМА Д. В. ПАВЛОВ ЮЛТАША УЙĂРСА ЛАРТНИ ÇИНЧЕН КĂЛАРНĂ УКАЗНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ çапла **йышăнать:**

СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитечĕн Председателĕ пулма Дмитрий Васильевич **Павлов** юлташа çирĕплетес.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1952 çулхи мартăн 8-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН «ЯЛХУÇАЛĂХ НАЛОГĔ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНА ХĂШПĔР УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН» КĂЛАРНĂ УКАЗНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ çапла **йышăнать:**

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1951 çулхи августăн 1-мĕшĕнче «Ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан Закона хăшпĕр улшăнусем кĕртесси çинчен» кăларнă Указа çирĕплетес.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1952 çулхи мартăн 8-мĕшĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси çинчен

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. ГОРКИН депутат тунă доклад

Депутат юлташсем! СССР Верховнăй Совет Президиумĕ СССР Верховнăй Советĕнче çирĕплетме Указсем тăратать. Çав Указсене, СССР Конституцийĕ тăрăх, СССР Верховнăй Совечĕн çирĕплетмелле.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1951 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчи Указпа Таджик ССР-ĕн Верховнăй Совет Президиумĕ Сталинабад облаçне пĕтересси çинчен тăратнă сĕнĕве тата 1951 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнчи Указпа Грузи ССР Верховнăй Совет Президиумĕ Грузи ССР-ĕнче Тбилиссипе Кутаиси облаçĕсене туса хурасси çинчен тăратнă сĕнĕве çирĕплетрĕ.

Çавăн пек Указсем кăларнă май, СССР Конституцийĕн 25-мĕшпе 27-мĕш статьисене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушса çырнисем кĕртес пулать.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ СССР Министрĕсен Совечĕн Строительство ĕçĕсем енĕпе ĕçлекен Государственнăй Комитетне туса хунă май, СССР Министрĕсен Совечĕ сĕннипе, 1951 çулхи мартăн 14-мĕшĕнче СССР Хула строительстви министерствине пĕтересси çинчен Указ йышăнчĕ тата 1951 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче, СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнче Апат-çимĕçсен государство резервĕсен главнăй управленийĕпе Государствăн пурлăх резервĕсен главнăй управленине туса хунă май, Государствăн апат-çимĕçсемпе пурлăхсен резервĕсен министерствине пĕтересси çинчен Указ кăларчĕ. 1951 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указпа СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитетне туса хунă.

Çав Указсене йышăннă май, СССР Конституцийĕн 70-мĕшпе 77-мĕш статьисене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушса çырнисем кĕртмелле.

СССР Верховнăй Советĕнче çирĕплетме çакăн пек Закон проекчĕ тăрататпăр:

«СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси çинчен калакан Закон.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1. СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1951 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче «Таджик ССР-ĕнчи Сталинабад облаçне пĕтересси çинчен» кăларнă Указа тата 1951 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче «Грузи ССР-ĕнче Тбилиссипе Кутаиси облаçĕсене туса хурасси çинчен» кăларнă Указа çирĕплетес».

Çавна май СССР Конституцийĕн 25-мĕшпе 27-мĕш статьисене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушса çырнисем кĕртес, çав статьясене çапла çырас:

«25 статья. Грузи Советлă Социализмлă Республикине Кутаисипе Тбилиси облаçĕсем, Абхаз тата Аджар Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикисем, Кăнтăр Осети автономиллĕ облаçĕ кĕреççĕ».

«27 статья. Таджик Советлă Социализмлă Республикине Гарм, Куляб, Ленинабад облаçĕсем тата Горно-Бадахшан автономиллĕ облаçĕ кĕреççĕ».

2. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн çак Указĕсене çирĕплетес: 1951 çулхи мартăн 14-мĕшĕнче «СССР Хула строительстви министерствине пĕтересси çинчен», 1951 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче «Государствăн апат-çимĕçпе пурлăхсен резервĕсен министерствине пĕтересси çинчен» тата 1951 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче «СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитетне туса хуни çинчен» кăларнă Указĕсене.

Çавна май СССР Конституцийĕн 70-мĕшпе 77-мĕш статьисене çакăн пек улшăнусемпе хушса çырнисем кĕртес:

70-мĕш статьяна «СССР Министрĕсен Совечĕн Строительство ĕçĕсем енĕпе ĕçлекен Государственнăй Комитечĕн председателĕ» тесе çырнинчен малалла «СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитечĕн председателĕ» тесе хушса çырас;

77-мĕш статьяран «Хула строительстви» тата «Государствăн апат-çимĕçпе пурлăхсен резервĕсен» сăмахсене кăларас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тăратнă сĕнÿсем тăрăх, иккĕмĕш сесси хыççăн ССР Союзĕн хăшпĕр министрĕсене ĕçрен хăтарни çинчен тата СССР министрĕсем пулма çынсем уйăрса лартни çинчен Указсем кăларчĕ.

1951 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче Дмитрий Васильевич Ефремов юлташа СССР Электропромышленность министрĕ пулма уйăрса лартни çинчен, çав кунах П. Г. Кабанов юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă май, СССР Электропромышленность министрĕн ĕçĕнчен хăтарни çинчен Указсем кăларчĕ.

1951 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх Иван Кузьмич Сиволап юлташа СССР Апат-çимĕç промышленность министрĕ пулма уйăрса лартнă. Çав вăхăтрах Д. В. Павлов юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă май, СССР Апат-çимĕç промышленноçĕн министрĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

1951 çулхи июлĕн 20-мĕшĕнче СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Николай Герасимович Кузнецов юлташа СССР Тинĕс-Çар министрĕ пулма уйăрса лартрĕ. Çав кун кăларнă Указпа Н. С. Юмашев юлташа, вăл хăй ыйтнипе, СССР Тинĕс-Çар министрĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

1951 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Павел Николаевич Кумыкин юлташа ССР Союзĕн Тулашри суту-илÿ министрĕ пулма уйăрса лартни çинчен Указ йышăннă тата М. А. Меньшиков юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă май, ССР Союзĕн Тулашри суту-илÿ министрĕн ĕçĕнчен хăтарни çинчен Указ кăларнă.

1951 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх Сергей Александрович Степанов юлташа СССР Ялхуçалăх машиностроенин министрĕ пулма уйăрса лартнă, 1951 çулхи мартăн 14-мĕшĕнче П. Н. Горемыкин юлташа СССР Ялхуçалăх машиностроени министрĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1951 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче Николай Николаевич Беспалов юлташа СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствăсен ĕçĕсен комитечĕн председателĕ пулма уйăрса лартни çинчен Указ йышăнчĕ. Çав вăхăтрах П. И. Лебедев юлташа СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствăсен ĕçĕсен комитечĕ председателĕн ĕçĕнчен хăтарни çинчен Указ кăларнă.

1951 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Дмитрий Васильевич Павлов юлташа СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитечĕн председателĕ пулма уйăрса лартрĕ.

СССР Конституцийĕн 49-мĕш статьине килĕшÿллĕн, Президиум СССР Министрĕсем пулма уйăрса лартни çинчен кăларнă Указсене, СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствăсен ĕçĕсен комитечĕн председательне уйăрса лартни çинчен кăларнă Указа, СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитечĕн председательне уйăрса лартни çинчен кăларнă Указа СССР Верховнăй Советĕнче çирĕплетме тăратать.

Президиум çавăн пекех 1951 çулхи августăн 1-мĕшĕнче «Ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан Закона хăшпĕр улшăнусем кĕртесси çинчен» йышăннă Указа, 1951 çулхи августăн 30-мĕшĕнче «СССР Верховнăй Совечĕн Ведомоçĕсенче» пичетленсе тухнăскере, СССР Верховнăй Советĕнче çирĕплетме тăратать.

Президиум СССР Верховнăй Советĕнче çирĕплетме тăратакан сĕнÿсем çакăн пек ĕнтĕ.

Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн Законсем хатĕрлекен комиссийĕсенче

Çак кунсенче Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн Законсем хатĕрлекен комиссийĕсен пĕрлехи ларăвĕ пулса иртнĕ.

Комиссисем СССР Юстици министрĕ К. П. Горшенин юлташ ССР Союзĕн Уголовно-процессуальнăй Кодексĕн проектне хатĕрлесси мĕнле пыни çинчен пĕлтернине итлесе сÿтсе явнă.

Çавăн пекех комиссисен уйрăммăн иртернĕ ларăвĕсем, Союз Совечĕн Законсем хатĕрлекен комиссийĕн ларăвĕ А. Н. Поскребышев юлташ председатель пулса ертсе пынипе, Национальноçсен Совечĕн Законсем хатĕрлекен комиссийĕн ларăвĕ И. А. Каиров юлташ председатель пулса ертсе пынипе пулса иртнĕ. Çав ларусенче комиссисен кулленхи ĕçĕнчи ыйтусене пăхса тухнă, çав ыйтусем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăннă.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Колхозсенчи парторганизацисен ӗҫне тӗпрен лайӑхлатмалла

ВКП(б) Куславкка райкомӗн пленумӗ ВКП(б) обкомӗн IX-мӗш пленумӗн ӗҫӗсем ҫинчен парти райкомӗн секретарӗ Г. Петрухин юлташ тунӑ доклада сӳтсе яврӗ.

Пӗчӗк колхозсене пӗрлештерни хыҫҫӑн, районти чылай пуҫламӑш парторганизацисем лӑхне чылай лайӑхланнӑ тата ҫирӗпленнӗ, хӑйсен кӗрешӳри пултарулӑхне ӳстернӗ. Районти колхозсенче пурне те парторганизацисем пур, вӗсенчен вунпӗрӗшӗнче партбюро тунӑ.

ВКП(б) райкомӗ парторганизаци секретарӗсемпе иртерекен семинарсен пахалӑхне чылай лайӑхлатнӑ. Районта малта пыракан «Динамо» колхоза иртерне семинар пысӑк усӑ кӳнӗ. Ҫак семинарта пулнисем «Динамо» колхоз ӗҫӗпе тӗплӗн паллашса, унӑн опытне вӗреннӗ.

Колхозри парторганизацисене ертсе пырассине лайӑхлатнӑ пулин те, ку ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Райком ӗҫӗнче парти обкомӗн VIII-мӗш пленумӗ йышӑннӑ решенийӗсене ҫителӗксӗр пурнӑҫласа пырать, колхозсенчи парторганизацисене ҫирӗплетес, вӗсен паха опытне сарас тӗлӗшпе кирлӗ таран тӑрӑшмасть. Райком секретарӗсем, бюро членӗсем тата пайсен заведующийӗсем парторганизаци секретарӗсене партин шалти ӗҫне йӗркелеме ҫителӗксӗр пулӑшаҫҫӗ. Райком бюровӗ парторганизацисен ӗҫӗ ҫинчен йышӑннӑ решенисене чылай вӑхӑт иртсен тин вырӑна ярса парать, решенисене пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесси ҫителӗксӗр пулса пырать. Райком бюровӗ колхозсенчи парторганизацисен секретарӗсен ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе начар ӗҫлет. Парторганизаци секретарӗсенчен 28 проценчӗ колхоз производствинче ӗҫлемеҫҫӗ.

Хӑшпӗр пуҫламӑш парторганизацисенче парти пухӑвӗсем сайра-хутра ҫеҫ пулаҫҫӗ, коммунистсене партпорученисем памаҫҫӗ, пухусенче большевикла критикӑна самокритикӑна анлӑ сарса ямаҫҫӗ.

Уйрӑм парторганизацисем колхоз производствинче малта пыракансене партие илес тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта «Дружба», Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсенчи парторганизацисем пӗр колхозника та партие илмен.

Ҫамрӑк коммунистсене воспитани парас ӗҫе парторганизацисем питех те ҫителӗксӗр туса пыраҫҫӗ. Колхозсенчи парторганизацисенчи кандидатсенчен 52 проценчӗн кандидатра тӑмалли стаж иртсе кайнӑ.

Уй-хир бригадисенче партгруппӑсем тӑвассишӗн парти райкомӗ сахал тӑрӑшать. 4 колхозра кӑна партгруппӑсем тунӑ, выльӑх-чӗрлӗх фермисенче пӗр группа та ҫук.

Коммунистсемпе колхоз кадрӗсене марксистла-ленинла воспитани парассине райком тивӗҫлипе ертсе пымасть. 9 колхозри парторганизацисем политшкулсемпе кружоксене занятисем йӗркеленӗ иртмеҫҫӗ, вӗренӳ планне пурнӑҫласа пымаҫҫӗ.

Нумай колхозсенче массӑллӑ ӗҫе вӑхӑтран вӑхӑтпа ҫеҫ туса пыраҫҫӗ. Уйрӑмах ку ӗҫ хӗрарӑмсем хушшинче начар. Агитацилле-массӑллӑ ӗҫе уй-хир бригадисемпе выльӑх-чӗрлӗх фермисенче начар йӗркеленӗ. Политикӑллӑ ӗҫе районти партипе совет активӗ сахал хутшӑнать. Парторганизацисенчен чылайӑшӗ партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе хуҫалӑх ӗҫӗсемпе ҫыхӑнтармасӑр тӑваҫҫӗ, колхоз правленийӗсен ӗҫне тӗрӗслесе тӑмалли правӑна усӑ курмаҫҫӗ, ҫӗрӗҫ культурине тырпул тухӑҫне ӳстерес, техникӑллӑ культурӑсем ытларах акса тӑвас, колхоз производствин тӗрлӗ отраслӗсене аталантарас, хуҫалӑх артелӗн Уставне тӗрӗс пурнӑҫласа пырас тӗлӗшпе сахал ӗҫлеҫҫӗ.

Районти парторганизацире общественӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе хакламаннине халӗ те пӗтермен-ха. Райком бюровӗпе райсовет исполкомӗ ку ӗҫе ҫителӗксӗр ертсе пыраҫҫӗ. Ҫавӑн пирки ӗнтӗ район выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли виҫӗ ҫулхи плана тултарман.

Пуҫламӑш парторганизацисем, колхоз руководителӗсем, хуҫалӑх пайӗпе МТС ҫуракине начар хатӗрленеҫҫӗ. Чылай колхозсенче хӗллехи агротехникӑллӑ мероприятисене пурнӑҫламаҫҫӗ.

Парторганизацисем колхозниксем хушшинчи социализмла ӑмӑртӑва сарса пырас ӗҫе ҫине ҫителӗксӗр пӑхаҫҫӗ, хуҫалӑхра малта пыракансен опытне массӑсем хушшинче куллен сармаҫҫӗ.

Райком пленумӗ хӑйӗн решенийӗнче ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерме хушса хӑварчӗ.

Парторганизаци секретарӗсен семинарӗ

ВКП(б) Советски райкомӗ пӗрлешнӗ колхозсенчи пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсен пӗр кунлӑх семинарне иртерчӗ. Унта колхоз правленийӗн ӗҫне тӗрӗслемелли правӑна парторганизацисем мӗнле пурнӑҫласа пыни ҫинчен Жданов ячӗпе тӑракан, Киров ячӗпе тӑракан тата Буденный ячӗпе тӑракан колхозсенчи пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсем тӗплӗ калав пачӗҫ.

«Восход» тата Володарский ячӗпе тӑракан колхозсенчи парторганизацисен секретарӗсем Алексеев тата Дмитриев юлташсем парти пухӑвӗсене хатӗрлесе иртерес ӗҫри хӑйсен опычӗпе паллаштарчӗҫ.

Парторганизаци секретарӗсен семинарӗ активлӑ иртрӗ, вӑл партиллӗ ӗҫри опыта пӗтӗҫтерме пулӑшрӗ.

Хатӗрлев организацийӗсен работникӗсен канашлӑвӗ

Ҫак кунсенче Шупашкарта республикӑри хатӗрлев организацийӗсенче ӗҫлекенсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу СССР Хатӗрлев министерствин Чӑваш АССР-ӗнчи уполномоченнӑйӗ Федотов юлташ 1951 ҫулта ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлемелли плана мӗнле пурнӑҫлани тата 1952 ҫулта хатӗрлев организацийӗсем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен тунӑ доклада сӳтсе яврӗ.

Иртнӗ ҫулта пирӗн республикӑри колхоз ӗҫченӗсем лайӑх тырпул ҫитӗнтерсе государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарчӗҫ. Пӗлтӗр государствӑна ыраш, тулӑ, хӑратул малтанхи ҫулхинчен ытларах панӑ, плана чылай иртерсе тултарнӑ. Республика ҫавӑн пекех утӑ, сӗрулми, нумай ҫул ӳсекен курӑк вӑрри, йӗтӗнпе кантӑр вӑрри, кок-сагыз вӑрри, сӑм хатӗрлемелли плансене те ӑнӑҫлӑ тултарчӗ.

Анчах республикӑри хатӗрлев организацийӗсем пахча ҫимӗҫ, [illegible]орка, хӑмла, вӑрманти улма-ҫырлисем хатӗрлемелли плана тултараймарӗҫ. Сӗт хатӗрлес ӗҫ япӑх пырать. Пӗтӗм сӗтӗ хатӗрлес тӗлӗшпе уйрӑмах Етӗрне, Куславкино, Пӑрачкав районӗсем, кантӑр сӳсӗ хатӗрлес тӗлӗшпе—Шӑмӑршӑ, Куславкка, Сӗнтӗрвӑрри, Октябрьски районӗсем юлса пыраҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл районсенчи хатӗрлев организацийӗсем йӗтӗнпе кантӑр продукцийӗ хатӗрлес ӗҫ ҫине кирлӗ пек пӑхманнинчен килет.

Докладчик республикӑра выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем хатӗрлес ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине палӑртать. Пӗлтӗр государствӑна аш-какай памалли плана 93,3 процент ҫеҫ тултарнӑ. Нумай колхозсенче государствӑна памалли выльӑхсене самӑртмаҫҫӗ, ҫакӑ вӑл пысӑк сиен кӳрет. Чылай районсем пӗлтӗр сӗт хатӗрлес тӗлӗшпе 1950 ҫулхинчен япӑхрах ӗҫленӗ. Республика государствӑна сӗт, ҫӑмарта, брынза памалли плана тултараймарӗ.

Ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлес ӗҫре пулнӑ ҫитменлӗхсем массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫе ҫителӗксӗр туса [illegible]нинчен, хатӗрлев ӗҫне сезонпа туса [illegible]нинчен, налог [illegible] кирлӗ пек ҫирӗплетмен-

кӑҫал та палӑраҫҫӗ. Сӑмахран, ҫак уйӑх пуҫланнӑ тӗле пӗрремӗш кварталта государствӑна аш-какай, сӗт памалли плана 30 процента яхӑн ҫеҫ тултарнӑ. Нумай хуҫалӑхсем халӗ те государствӑна сӗт пама пуҫӑнман. Ҫӑмарта хатӗрлеме республикӑра пачах тытӑнман. Хатӗрлев организацийӗсенче ӗҫлекенсен иртнӗ ҫулхи ҫитменлӗхсене кӑҫал пӗтермелле, 1952 ҫулта ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлемелли плана срокчен тултарассишӗн кӗрешмелле.

Хатӗрлев организацийӗсем кӑҫал пухса илекен тырпула йышӑнма лайӑх хатӗрленме тивӗҫлӗ. Кӑҫал Заготзерно пункчӗсенче ҫӗнӗрен вуншар складсем тумалла. Строительство ӗҫӗ Вӑрнарти, Сӗнтӗрвӑрринчи, Ҫӗмӗрлери пункчӗсенче питех те ҫителӗксӗр пырать-ха. Хатӗрлев организацийӗсен кадрӗсене суйласа илес, вӗсене вӗрентсе ӳстерес тӗлӗшпе те ӗҫе лайӑхлатмалла. Чӑваш республикинчи «Заготживсырье» кантурӗ енӗпе 1951 ҫулта мӗнпур ӗҫлекенсенчен виҫӗ пайран пӗр пайӗ улшӑннӑ. Ку вӑл кадрсем суйласа илес ыйту ҫине тимлӗ пӑхманни ҫинчен калать.

Доклад тӑрӑх 22 ҫын тухса калаҫрӗ. Прение тухса калаҫакансем уйрӑмах Маслопром тресчӗ (управляющийӗ Кузнецов юлташ) ҫителӗксӗр ертсе пынипе хӑшпӗр районсенче сӗт-ҫу йышӑнма хатӗрленесе ҫитменнине палӑртрӗҫ. Потребительсен кооперацийӗ те ҫӑмарта йышӑнма тивӗҫлипе тытӑнман. Вырӑнсенче ҫӑмарта пухакан корзинщиксем тупса ҫитермен. Плана ӑнӑҫлӑ тултарас тесен, сӗт, ҫӑмарта, аш-какай тата ытти продуктсем хатӗрлемелли задание кашни колхоз, кашни хуҫалӑх тӑрӑх уйӑхран-уйӑха тултарса пырас пулать.

Канашлу хупӑнас умӗн ВКП(б) Чӑваш обкомӗн секретарӗ И. Шмаков юлташ сӑмах тухса каларӗ.

Канашлу 1952 ҫулта ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлемелли плана срокчен тултарма обязательствӑсем илсе Мордва тата Мари республикисенчи хатӗрлев организацийӗсен работникӗсемпе социализмла ӑмӑртса ӗҫлеме йышӑнчӗ.

Канашлура пулнисем пысӑк ӗҫкелӳпе халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ И. В. Сталин юл-

Канашри машина-трактор станцийӗнчи 12-мӗш трактор бригади иртнӗ ҫулхи ӗҫсен планне 130 процент тултарнӑ. Бригада кӑҫал тракторсемпе ӑкӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене чи малтан юсаса пӗтернӗ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: МТС-ри 12-мӗш трактор бригадин бригадирӗ А. Захарова юлташ.

Пирӗн колхозри хӗрарӑмсем

Пирӗн колхозра ӗҫкунӗсен минимумне тултарман пӗр хӗрарӑм та ҫук. Нумайӑшӗ ҫулталӑк хушшинче 200—250 ӗҫкунӗ таран ӗҫлесе илеҫҫӗ. 1951 ҫулта арҫынсем 61.57[illegible] ӗҫкунӗ тунӑ пулсан, хӗрарӑмсем вара 107.435 ӗҫкунӗ тунӑ.

Сталин юлташ: хӗрарӑмсем колхозсенче—пысӑк вӑй пулса тӑраҫҫӗ, тесе каланӑ. Колхозри пархатарлӑ ӗҫ пирӗншӗн чыслӑхпа паттӑрлӑх ӗҫӗ пулса тӑчӗ. Пирӗн колхоз ҫулран-ҫул пуянланса пырать, унпа пӗрлех общественӑллӑ пуянлӑх та ӳсет. Колхозниксен пурнӑҫӗ татах та культурӑллӑ та пуян пулса пырать.

Колхоз клубӗнче лайӑх илемлетнӗ Хисеп хӑми пур. Унта кӗме тивӗҫлӗ пулнӑ 72 ҫын хушшинче 43 хӗрарӑм ятне куратпӑр. Вӗсем уй-хир бригадин членӗсем: Д. Сидоркина, А. Храмова, К. Безрукова, Ю. Сурова, В. Клочкова, выльӑх-чӗрлӗх работникӗсем: Е. Трошкина, К. Ситухина тата ыттисем те. Вӗсене кашниех колхозра хисеплесе асӑнаҫҫӗ. Сӑмахран, Юлия Сурова юлташа илер. Вӑл 13 ҫелле сеялкапа 5,5 гектар вырӑнне 12—13 гектар акса пычӗ. Пӑру пӑхакан Анастасия Трошкина юлташ та хӑйӗн ӗҫне питех те юратса туса пырать. Нилӗк ҫул хушшинче вӑл пӑхса ӳстерекен пӑрусенчен пӗри те вилмен пулман.

Колхозри ӗҫӗн кирек хӑш отраслӗне илсен те, хӗрарӑмсем [illegible]сенчен кая юмаҫҫӗ, пысӑк тухӑҫлӑхпа стахановла ӗҫлеҫҫӗ.

Пирӗн ялта колхоз пуҫличчен пӗр теҫеттинран 50 пӑт [illegible] тырпул туса илни шутланнӑ. Халӗ эпир ҫулсерен кашни гектартан 180—200 пӑт е унтан ытларах та ыраша тулӑ туса илетпӗр. Паллах ӗнтӗ, кун пек пысӑк тухӑҫлӑ тырпул хӑй тӗллӗн килмен.

Хастарлӑ ӗҫленӗ 42 хӗрарӑма правительствӑн орденӗсемпе тата медалӗсемпе наградӑланӑ, тӑватӑ хӗрарӑма вара — Т. Елдырева, Е. Ерошина, В. Попкова, В. Саканина колхозницӑсене Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ ятне панӑ.

Совет влаҫӗпе колхозлӑ строй хӗрарӑмпа арҫын хушшинчи уйрӑмлӑха пӗтерчӗҫ, хӗрарӑма пурнӑҫӑн анлӑ ҫулӗ ҫине кӑларчӗҫ. Вӗсем общество тата государство ӗҫӗнче активлӑ хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ.

Пирӗн колхозӑн правленийӗ тӑхӑр ҫынтан тӑрать, вӗсенчен виҫҫӗшӗ—хӗрарӑм. Кольцовка ял Совет председателӗ пулса Клавдия Федоровна Ситухина колхозница ӗҫлет. Е. Милицкова колхозницӑна иккӗмӗш хут ӗнтӗ ӗҫсынни депутачӗсен Вӑрнар район Совечӗн депутатне суйларӗҫ. Вӑл хӑйӗн депутат тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫласа пырать. Колхоз агрономне — Зоя Петровна Ленская юлташа колхоза вӑйлӑ тырпул туса илме пулӑшнӑшӑн правительство Ленин орденӗпе икӗ хутчен наградӑларӗ.

Эпир телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫшӑн Большевиксен партийӗпе тӑван совет правительствине, юратнӑ Сталина чунтан тав тӑватпӑр. Колхоз производствин тата хастарлӑрах ӗҫлеме сӑмах паратпӑр.

Р. ПАШКИНА.

Вӑрнар районӗнчи Кольцовкари Ленин орденлӗ, Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗ.

Вулакансен конференцийӗ

Канаш районӗнчи Янкӑлчри [illegible] шкулта вӗренекенсем чӑваш писателӗсене поэчӗсем тата драматургӗсем [illegible] кӗнекесене юратса вулаҫҫӗ. Кунта час-часах вулакансен конференцийӗсем, каласусем пулса иртеҫҫӗ. Ҫавӑн пек конференцисем Л. Агаковӑн «Вӑрҫӑ ачисем», «Ылтӑн вӑчӑра», И. Хусанкайӑн «Тӑван» тата ытти кӗнекисем тӑрӑх пулнӑ.

Ҫак кунсенче Куҫма Турхан ҫырнӑ «Пӑмраллӑ ял» ятлӑ роман тӑрӑх конференци иртерчӗҫ. Конференцире 10-мӗш класра вӗренекен М. Иванов «Пӑмраллӑ ял»—вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тата вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи чӑваш ялӗн пурнӑҫӗ ҫинчен ҫырнӑ роман» тема тӑрӑх, П. Васильев вӗренекен «Большевиксен партийӗ—колхоз строительствин организаторӗ» тема тӑрӑх, В. Шомякин «Халӑхсен туслӑхӗ—пысӑк вӑй» тема тӑрӑх докладсем туса пачӗҫ.

Докладчиксем тата тухса каланӑ нумай юлташсем «Пӑмраллӑ ял» романӑн лайӑх енӗсемпе ҫитменлӗхӗсене палӑртрӗҫ.

Наци ыйтӑвӗн ленинла-сталинла программи тата ӑна Совет Союзӗнче ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлани

Пирӗн Тӑван ҫӗршывра наци ыйтӑвне ӑнӑҫлӑ татса панӑ. Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци ҫӗнтернипе ирӗке тухнӑ халӑхсем пӗр ҫемьери пек килӗштерсе, туслӑ пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем пурте пӗр тан праваллӑ.

Наци ыйтӑвӗн ленинла-сталинла программине пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫласа пырса, 1952 ҫулта, Пӗтӗм Союзри Советсен Пӗррмӗш Съездӗнче, халӑхсен пӗртанлӑхӗн тата ирӗклӗхӗн никӗсӗсем ҫинче Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне туса хунӑ. Ун хыҫҫӑн иртнӗ тапхӑр социализм никӗсӗ ҫинче нумай нациллӗ государство тунӑ опыт пӗтӗмпех ӑнӑҫлӑ пулнине яр-уҫҫӑн кӑтартса пачӗ. Ҫакӑ вӑл Ленин—Сталин партийӗн нацисем тӗлӗшпе тытса пыракан политики чаплӑ ҫӗнтерӳ туни пулчӗ.

Совет Союзӗнче тунӑ нумай нациллӗ социализмлӑ государство та ҫирӗплӗхне тӗнчен кирек хӑш пайӗнчи кирек хӑш нациллӗ государство ӑмсанма пултарать.

ССР Союзӗн пахх тӗслӗхӗ пусмӑрти халӑхсене пурне те империализм чуралӑхӗнчен ирӗке тухассишӗн кӗрешме хавхалантарать.

* * *

Пирӗн гениллӗ ҫулпуҫӑмӑрсем — В. И. Ленинпа И. В. Сталин, пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлесе, парти аталанса ӳснӗ тапхӑртах наци ыйтӑвӗн большевикла программипе политикине туса хатӗрленӗ. Вӗсем наци ыйтӑвне татса парас тӗлӗшпе Маркспа Энгельс вӗрентнине яланах асра тытса, ку ыйтӑва историллӗ ҫӗнӗ тапхӑрта малалла аталантарнӑ.

Ленинпа Сталин наци ыйтӑвне хӑйне уйрӑм тата государствӑн шалти ыйтӑвӗ пулнинчен колонисемпе пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенчи халӑхсене империализм пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларасси ҫинчен вӗрентекен пӗтӗмӗшле ыйту туса хунӑ.

Наци ыйтӑвӗ тӗлӗшпе тӗрӗс программа туса хатӗрлес ӗҫре наци ҫинчен калакан ленинла-сталинла теори питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. В. И. Ленин ҫак ыйтӑва хӑйӗн «Нацисен самоопределени прави ҫинчен», «Наци ыйтӑвӗ пирки критикӑллӑ заметкӑсем» тата ытти статьисенче, И. В. Сталин хӑйӗн «Марксизм тата наци ыйтӑвӗ» ятлӑ гениллӗ произведенийӗнче питех те лайӑх ҫутатса панӑ.

Сталин юлташ «Марксизм тата наци ыйтӑвӗ» ятлӑ кӗнекере нацин марксистла теорине наука тӗлӗшӗнчен пур енчен те никӗслесе, наци мӗне пӗлтернине чи малтан материалистла тӗрӗс определени панӑ. Сталин юлташ: «Наци ҫынсен истори тӑршшӗнче йӗркеленсе ҫитнӗ ҫирӗп пӗрпеклӗхӗ пулса тӑрать, вӑл—чӗлхе, территори, экономикӑллӑ пурнӑҫ пӗрпеклӗхӗн никӗсӗ ҫинче тата культура пӗрпеклӗхӗнче палӑракан психика уйрӑмлӑхӗн никӗсӗ ҫинче пуҫланса кайнӑ» — тесе вӗрентет. (Соч., 2 том, 296 стр.).

Сталин юлташ хӑйӗн кӗнекинче ҫакна та палӑртнӑ: наци вӑл, кирек мӗнле историллӗ явлени пекех, улшӑну законне пӑхӑнса тӑрать, унӑн хӑйӗн историйӗ, пуҫламӑшӗ тата вӗҫӗ те пур.

Сталин юлташ кӑтартса панӑ тӑрӑх, наци вӑл историллӗ категори, капитализм саманин продукчӗ пулса тӑрать. Феодалла саланчӑклӑх пӗтсе, капитализм аталанса пынӑҫемӗн буржуалла нацисем йӗркеленсе ҫирӗпленсе пынӑ.

Наци ыйтӑвне тӗпчесе вӗреннӗ тата партин наци ыйтӑвӗ тӗлӗшпе калакан программине туса хатӗрленӗ чухне В. И. Ленинпа И. В. Сталин историллӗ условисене тӗплӗн шута илнӗ. Сталин юлташ хӑйӗн «Марксизм тата наци ыйтӑвӗ» ятлӑ ӗҫӗнче ҫапла ҫырнӑ: «Ыйтӑва диалектикӑлла лартни ӑҫта та пулин кирлӗ пулсан, вӑл шӑпах ҫакӑнта, наци ыйтӑвӗнче кирлӗ». Наци ыйтӑвне историллӗ условисем аталанса пынипе ҫыхӑнтарсан ҫеҫ тӗрӗс татса пама пулать.

Наци ыйтӑвӗ тӗлӗшӗнчи большевикла программӑн тӗп пункчӗ—нацисен самоопределени прави пулса тӑрать.

Россиӑра буржуалӑ-демократиллӗ нациллӗ юхӑм ҫӗкленсе пынӑ, уйрӑм халӑхсем хӑйсен нациллӗ государствисене туса хума тӑрӑшнӑ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ, тенӗ В. И. Ленин, Россия валли нацисен самоопределени прави ҫинчен калакан пункт кирлӗ. Хӗвеланӑҫри социал-демократиллӗ партисемшӗн вара ҫав пункт пачах кирлӗ мар.

Россиӑри социал-демократи хӑй пуҫланса кайсанах нацисен самоопределени правишӗн тӑнӑ. Вӑл ҫакна пӗлтернӗ: наци хӑй ҫеҫ хӑйӗн кун-ҫулне ирӗклӗн, хӑй кӑмӑлланӑ пек татса пама пултарать: наци пурнӑҫне ирӗксӗрлесе хутшӑнма юрамасть, унӑн шкулӗсемпе ытти учрежденийӗсене ҫӗмӗрме, унӑн йӑлисене пӑсма, унӑн чӗлхине хӗсӗрлеме, прависене пӗчӗклетме никам та пултараймасть. Наци хӑйне уйрӑм государство туса хума та право памалла.

Нацисен самоопределени правишӗн кӗрешсе, Ленинпа Сталин нацисене пусмӑрласа пурӑнас политикӑна тӗп тӑвас, нацисем хушшинчи хирӗҫӗве пӗтерес тӗллеве лартнӑ. Анчах нацисем хушшинчи хирӗҫӗве ҫӗршыва пӗтӗмпех демократизацилени ҫеҫ пӗтерсе хума пулать.

Пирӗн парти нацисен пӗр-пӗринчен уйрӑлса тухас правине йышӑнать пулин те, ҫакӑ вӑл кашни наци кирек мӗнле пулсан та уйрӑлмалла, хӑйне уйрӑм государство пулса тӑмалла, тенине пӗлтермест. Пӗр-пӗр наци устройствин форми ҫинчен тӑракан ыйтӑва ҫав нацин рабочи класӗпе ӗҫсынни массисен тӗп интересӗсене шута илсе, пролетарисен класӗн пӗтӗм тӗнчери социализмшӑн кӗрешес интересӗсене шута илсе кашнинчех хӑйне уйрӑммӑн татса памалла.

Ҫавӑнпа та ӗнтӗ, пирӗн парти чухне большевиксем пирӗн ҫӗршыв пурнӑҫӗнче наци ыйтӑвӗ мар, ҫӗр ыйтӑвӗ тӗп вырӑн йышӑнса тӑнине шута илнӗ. Россиӑра вырӑс ыйтӑвӗн кун-ҫулӗ, унпа пӗрле нацисене ирӗке кӑларас ӗҫӗн кун-ҫулӗ те ҫӗр ыйтӑвне татса панипе, крепостной йӗрке юлашкисене пӗтернипе, урӑхла каласан, ҫӗршыва демократизациленипе ҫыхӑнса тӑнӑ.

В. И. Ленинпа И. В. Сталин парти программи тӑрӑх нацисене самоопределени прави парассине никӗслесе кӑтартнипе ҫеҫ ҫаранман. Вӗсем ҫав правӑна пурнӑҫламалли формӑсене, нумай нациллӗ социализмлӑ государство туса хумалли майсене те кӑтартса панӑ. Хӑйне уйрӑм государствӑна уйрӑлас мар текен нацисем валли большевикла программа облаҫлӑ автономи тума май пуррине палӑртать. Ку автономи Австрири суя социалистсен культурӑллӑ-нациллӗ «автономийӗнчен» пачах уйрӑлса тӑрать, мӗншӗн тесен вӑл национальноҫсене политика, экономика, культура тӗлӗшӗнчен ирӗклӗн аталанма май парать.

Большевикла программӑн наци ыйтӑвӗ тӗлӗшӗнчи питех те кирлӗ тепӗр требованийӗ вӑл—буржуазие хирӗҫ, эксплуататорсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре рабочи класс интернационаллӑ пӗрлӗхлӗ пулмалла текен принцип.

Марксистла-ленинла партин наци ыйтӑвӗ тӗлӗшӗнчи программин ҫак тӗп принципӗсене большевиксем оппортунизма хирӗҫ пынӑ кӗрешӳре хӳтӗлесе хӑварнӑ. Ку принципсене пирӗн партин ятарласа йышӑннӑ постановленийӗсемпе решенийӗсенче пӗр хут ҫеҫ мар ҫирӗплетсе хунӑ.

* * *

Ленин—Сталин партийӗн наци ыйтӑвӗ тӗлӗшпе туса панӑ уҫӑмлӑ программи пирӗн ҫӗршыври тӗрлӗ нацисен революциллӗ вӑйӗсене патша йӗркине хирӗҫ, капитализм стройне сирпӗтсе антарса пролетариат диктатурине туса хурассишӗн кӗрешме пӗтӗҫтерчӗ.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци нациллӗ пусмӑр сӑнчӑрне татрӗ, капитализм тӗнчин чуралӑхӗнче асапланса пурӑннӑ «халӑхсен тӗрмине»—патша Российине ҫапса ҫӗмӗрчӗ.

Совет влаҫӗ пуҫлансанах пирӗн ҫӗршывра Национальноҫсен ӗҫӗсен Халӑх Комиссариатне туса хунӑ, ӑна Сталин юлташ ертсе пынӑ. Национальноҫсен ӗҫӗсен Халӑх Комиссариачӗн умӗнче нациллӗ пусмӑр юлашкисене пӗтерес, Россиӑри тӗрлӗ халӑхсен экономикӑпа культура пурнӑҫӗнчи танмарлӑхне пӗтерес тата ҫӗршыври нацисем пӗр-пӗринпе тӑванла килӗштерсе ӗҫлемелле тӑвас задача тӑнӑ.

1917 ҫулхи ноябрӗн 15-мӗшӗнче Совет правительстви, «Россиӑри халӑхсен прависен декларацине» пичетлесе кӑларнӑ. Ленинпа Сталин алӑ пусса кӑларнӑ ҫав историллӗ документра Россиӑри халӑхсем пурте пӗр тан праваллӑ пулнипе, вӗсепе уйрӑлса тухса хӑйсен государствине туса хурас таранах самоопределени прави панине; наци тата тӗн тӗлӗшӗнчен пӗр халӑха тепринчен пӗчӗкрехе е пысӑкраха хурас йӗркене пӗтернине, Россиӑри мӗнпур нацисемпе этнографиллӗ ушкӑнсем ирӗклӗн аталанмаллине закон йӗркипе ҫирӗплетсе панӑ.

Анчах ҫӗршыври мӗнпур нацисене пӗр тан правӑсем панипех вӗсен чӑн-чӑн пӗртанмарлӑхӗ пӗтме пултарайман. Ҫакна тӑвас тесен, кая юлнӑ халӑхсене хӑйсен хуҫалӑхӗпе культурине аталантарма материальнӑй пулӑшу памалла пулнӑ.

Сталин юлташ туса хатӗрленӗ программа тӑрӑх, кая юлнӑ халӑхсемпе нацисен культурине ӳстерме, нациллӗ окраинӑсенче ку чухнехи промышленноҫа аталантарма, кая юлнӑ нацисемпе халӑхсене хуҫалӑхӑн аслӑ формисене пӗрлештерме, кая юлнӑ нацисемпе малта пыракан нацисен ӗҫсыннисем хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗринпе туслӑн ҫыхӑнса ӗҫлеме, вырӑнти халӑхсенчен рабочи класпа халӑх интеллигенцине ӳстерсе ҫитӗнтерме лайӑх майсем туса панӑ.

Большевиксен партийӗ ертсе пынипе Совет правительстви ленинла-сталинла наци политикине вӗҫне ҫитиех пурнӑҫласа пычӗ, ҫавна пула ӗлӗк кая юлнӑ, патша Российин вӑхӑтӗнче вилсе пӗтес патне ҫитнӗ халӑхсем экономика, политика тата культура тӗлӗшӗнчен малалла хӑвӑрт аталанчӗҫ. Ҫӗршыва индустриализацилемелли тата ялхуҫалӑхне коллективизацилемелли политикӑна пурнӑҫланипе пирӗн ҫӗршыври облаҫсен ӗлӗкхи пек промышленноҫлӑ тата ялхуҫалӑхлӑ облаҫсене пайланса тӑрасси пӗтрӗ. Совет Союзӗнче социализм ҫӗнтерни наци ыйтӑвне вӗҫне ҫитиех татса пама, халӑхсен пӗртанлӑхӗпе тӑванла союзне туса хума май пачӗ.

Ленинла-сталинла наци политикин чаплӑ ҫӗнтерӗвӗ уйрӑмах Вӑтам Азири халӑхсен пурнӑҫӗнче лайӑх курӑнать. Совет Союзӗн пӗтӗм промышленноҫӗ 1940 ҫул тӗлне, 1913 ҫулхипе танлаштарсан, 10,9 хут ӳснӗ пулсан, Казах ССР-ӗн промышленноҫӗ ҫав вӑхӑт тӗлне 22,2 хут, Таджик ССР-ӗн промышленноҫӗ — 242 хут ӳснӗ. Совет влаҫӗн ҫулӗсенче Киргизире электроэнерги бази 100 хут ӳснӗ. Электроэнерги туса кӑларасси Узбекистанра 400 хут ӳснӗ.

ССР Союзӗнче ленинла-сталинла наци политики чаплӑ ҫӗнтерӳ туни Чӑваш республикин ҫитӗнӗвӗсенчен те лайӑх курӑнать. Сӑмахран, 1950 ҫулта Шупашкарти Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ завод кӑларнӑ продукци хисепӗ революцичченхи Чӑваш республикин территорийӗнчи пӗтӗм промышленность туса кӑларнинчен пилӗк хут ытларах пулчӗ.

Экономикӑпа культура аталанӑвӗнче тата классен структуринче тӗпренех улшӑнусем те улшӑнчӗҫ. Великороссене шанмасӑр тӑрасси пӗтрӗ, халӑхсем экономика, культура тата вӑрҫӑ ӗҫӗнче пӗр-пӗрне пулӑшса пырасси йӗркеленчӗ. Пирӗн ҫӗршывра ҫӗнӗ, социализмлӑ нацисем ӳссе ҫитӗнчӗҫ, вӗсем патша Российинчи нацисенчен класлӑ составӗпе те, хӑйсен интересӗсемпе те тӗпренех уйрӑлса тӑраҫҫӗ.

Ҫав пысӑк улшӑнусем пӗтӗмпех большевиксен партийӗн политики тӗрӗс пулнинчен, халӑхсем хушшинчи хирӗҫӳсене тата шанмалӑха сарса пынӑ эксплуататорла классене пӗтернинчен, влаҫра интернационализм идейисене тӗрӗс тытса пыракан рабочи класс пуҫ пулса тӑнинчен килнӗ. Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе пирӗн ҫӗршыври халӑхсем обществӑпа хуҫалӑх пурнӑҫӗнче пӗр-пӗрне тӑванла пулӑшса пырасси ҫирӗпленчӗ, халӑхсен формипе нациллӗ, содержанийӗпе социализмлӑ культури ӳссе чечекленчӗ.

Совет Союзӗнче наци ыйтӑвне ӑнӑҫлӑ татса пани общество аталанӑвӗнче политика, надстройка, политикӑллӑ учрежденисем активлӑ роль йышӑнни ҫинчен калакан ленинла-сталинла вӗрентӳ тӗрӗс пулнине тепӗр хут уҫҫӑн кӑтартса парать.

Патша Российи вӑхӑтӗнче пусмӑр тӳссе пурӑннӑ тата кая юлнӑ халӑхсем, ҫӗнӗрен ҫуралса тухса, малалла аталанас ӗҫре Совет Союзне кӗрекен нацисенчен чи пысӑкки—аслӑ вырӑс халӑхӗ вӗсене тӑванла пулӑшса пыни питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

Аслӑ вырӑс халӑхӗ Россиӑри ытти халӑхсене Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче ҫеҫ мар, патша влаҫӗ вӑхӑтӗнче те нумай пулӑшнӑ. Патша влаҫӗ великороссемпе ытти халӑхсене хирӗҫтерсе пурӑнма тӑрӑшнӑ пулин те, Россиӑри окраинӑсенчи ӗҫсынни массисем вырӑс халӑхӗ тавра пӗтӗҫнӗ, мӗншӗн тесен вырӑс халӑхӗ ҫӗршыври малта пыракан наци пулнӑ тата вӑл яланах расӑсем хушшинчи курайманлӑх политикипе идеологине хирӗҫ кӗрешнӗ. Ытти халӑхсене вырӑс халӑхӗ патне туртӑнтаракан вӑй вырӑс буржуазийӗ мар, Плехановпа Ленин, Белинскипе Чернышевский, Пушкинпа Толстой, Глинкӑпа Чайковский, Горькипе Чехов, Сеченовпа Павлов, Репинпа Суриков, Суворовпа Кутузов нацийӗ пулнӑ.

Пирӗн ҫӗршыври расӑсемпе нацисен пӗртанлӑхӗн идеологийӗ, халӑхсем хушшинчи туслӑх идеологийӗ, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра гитлеровецсен национализмпа расӑллӑ курайманлӑх идеологине хирӗҫ пысӑк ҫӗнтерӳ турӗ. Совет Союзӗнчи халӑхсем вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче Ленин—Сталин партийӗ тавра, Совет правительстви тавра, юратнӑ ҫулпуҫӑмӑр аслӑ Сталин тавра татах таччӑнрах пӗтӗҫрӗҫ. Ҫакӑ вӑл вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пилӗкҫуллӑх плана ӑнӑҫлӑ тултарнинче лайӑх палӑрчӗ. Совет Союзӗнчи социализмлӑ нацисем коммунизм строительствинче ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ тӑваҫҫӗ.

Анчах капитализмлӑ ҫӗршывсенчи буржуази, уйрӑмах Америкӑпа Англи буржуазийӗ, империалистла вӑрҫӑ пуҫласа яни капитализм хирӗҫӗвӗсенчен, кризисӗсенчен тухма ӗмӗтленет. Америка империалисчӗсем, гитлеровецсем пекех, массӑсем хушшине национализм, национал-шовинизм, буржуалла космополитизм шухӑшне сараҫҫӗ.

Большевиксен партийӗ буржуалла космополитизм идейисене идеологиллӗ ӗҫӗн пур участокӗсенче те тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пырать. Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви пирӗн халӑха пролетарилле интернационализм шухӑшӗпе воспитани пама, кашни халӑхӑн культурине, прогрессивнӑй ӗҫӗсене хисеплеме вӗрентеҫҫӗ.

Финлянди правительствин делегацине йышӑннӑ чухне Сталин юлташ ҫапла каларӗ: «Совет ҫыннисем ҫапла шутлаҫҫӗ: кашни нацин—пурӗ пӗрех, пысӑк-и вӑл, пӗчӗккӗ-и—хӑйӗн качествӑллӑ уйрӑмлӑхӗ, хӑйӗн специфики пур, ҫав пахалӑх унӑн ҫеҫ пур, ытти нацисен ҫав пахалӑх ҫук. Ҫав уйрӑмлӑхсем кашни наци пӗтӗм тӗнче культурин пуянлӑхне хывакан вклад пулса тӑраҫҫӗ, вӗсем ӑна ӳстереҫҫӗ, ӑна пуянлатаҫҫӗ. Ҫак енчен пур нацисем те—пысӑккисем те, пӗчӗккисем те пӗр пек вырӑнта тӑраҫҫӗ, кашни наци урӑх кирек хӑш нацие те пӗр пек пӗлтерӗшлӗ».

Совет государстви мӗнпур нацисен нациллӗ интересӗсене хӳтӗлесе тӑрать, вӗсене хӗсӗрлессипе пусмӑрланине хирӗҫ кӗрешет. В. И. Ленин «Великороссен нациллӗ мӑнкӑмӑллӑхӗ» ятлӑ статьинче ҫапла кӑтартса пачӗ: «Эпир, великорус рабочийӗсем, нациллӗ мӑнкӑмӑллӑха туллин туйса тӑраканскерсем, кирек мӗнле пулсан та ирӗклӗ те никама пӑхӑнман, хӑйне хӑй тытса тӑракан, демократиллӗ, республикӑллӑ, мӑнкӑмӑллӑ Великороссие тӑвасшӑн, хӑйӗн кӳршисемпе хутшӑнса пурӑнассине аслӑ наци намӑслантаракан крепостной привилегисен принципӗ тӑрӑх мар, этемлӗхӗн пӗртанлӑх принципӗ тӑрӑх туса пыракан Великороссие тӑвасшӑн».

В. И. Ленинӑн ҫак аслӑ сӑмахӗсене пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртнӗ, Пирӗн Тӑван ҫӗршыв Ленин ӗмӗтленнӗ пек ҫӗршыв пулса тӑчӗ.

Пирӗн чаплӑ ҫӗршыва, тӗнчери чи революциллӗ пролетариата ӳстерсе ҫитӗнтернӗ, ленинизма суратса кӑларнӑ ҫӗршыва, малта пыракан пӗтӗм этемлӗхе социализмлӑ малашлӑх патне ымалли ҫула сутатса тӑракан ҫӗршыва мӗнле савӑнса юратас мар-ха! Чӗрӗ вӑй кӗртсе пыракан совет патриотизмне ӳстерессипе, Совет Союзӗнчи халӑхсен туслӑхне ҫирӗплетессипе пирӗн обществӑна малалла кайма пулӑшакан чыслӑ задача пулса тӑрать.

Г. ЦАРЕВ.

Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Великобритани тата Франци Правительствисене панă нота

Мартăн 10-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ А. А. Громыко Великобритани Посолне Гаскойн господина, США ĕçĕсен Вăхăтлăх Поверенныйне О'Шонесси господина тата Франци ĕçĕсен Вăхăтлăх Поверенныйне Брионваль господина Совет Правительстви Германипе тумалли мирлĕ договора хатĕрлес ыйтупа панă нотăна панă. Нотăпа пĕрле Германипе тумалли мирлĕ договорăн никĕсĕсен Совет Союзĕ хатĕрленĕ проектне панă.

Аялтарахра США Правительствине панă нотăпа Германипе тумалли мирлĕ договорăн никĕсĕсен асăннă проектне пичетлетпĕр.

«Совет Правительстви Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительствине çакна асăрхаттарма кирлĕ тесе шутлать: Европа вăрçă чарăннăранпа çичĕ çула яхăн иртрĕ пулин те, Германипе çаплах мирлĕ договор туман.

Çак йĕркеллĕ мар лару-тăрăва пĕтерес шутпа Совет Правительстви, Демократиллĕ Германи Республикин Правительстви тата державăран Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатма ыйтнине хутĕлесе, хăй енчен Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительствине, çавăн пекех Великобританипе Франци Правительствисене, Германипе мирлĕ договор тăвас ыйтăва пĕрле пăхса тăмасăрах сÿтсе явма сĕнет, çывăх вăхăтрах мирлĕ договорăн пĕр-пĕрин калаççа таталса тумалли проектне хатĕрлеме, çавна тĕнчери çĕршывсен тивçĕлĕ конференцийĕнче, çав ыйтупа интересленекен мĕнпур государствăсене хутшăнтарнă конференцире пăхса тухмашкăн тăратма сĕнет.

Паллах ĕнтĕ, çавăн пек мирлĕ договора Германи тÿрремĕнех хутшăннипе, Пĕтĕм Германи Правительствине хутшăнтарнипе сырса хатĕрлес пулать. Кунтан çакă тухса тăрать: Германие контроллесе тăрас ĕçе СССР, США, Англи тата Франци туса тăраççĕ, вĕсен çак ыйтăва — Германи халăхĕн ирĕкне палăртса тăракан Пĕтĕм Германи Правительствине хăвăртрах туса хурас ĕçре пулăшакан условисене тăвасси çинчен пăхса тухмалла.

Мирлĕ договор проектне хатĕрлес ĕçе çăмăллатас шутпа Совет Правительстви хăй енчен США, Великобритани тата Франци Правительствисене Германипе тумалли мирлĕ договорăн никĕсĕсен çакăнпа пĕрле ярса паракан проектне пăхса тухма сĕнет.

Çак проекта сÿтсе явма сĕнсе, Совет Правительстви çав вăхăтрах ку ыйту тăрăх паракан ытти сĕнÿсене те пăхса тухма килĕшни çинчен пĕлтерет.

СССР Правительстви çак сĕнÿ пирки США Правительствинчен май килнĕ таран кĕске вăхăт хушшинче ответ илме шутлать.

Совет Правительстви çакăн пек нотăсене Великобританипе Франци Правительствисене те ярса панă.

Германипе тумалли мирлĕ договорăн Совет Правительстви сĕнекен проекчĕ

Германипе вăрçма чарăннăранпа çичĕ çула яхăн иртрĕ. Анчах Германин хăйĕн мирлĕ договор çук, вăл пайланнипех тăрать, вăл çаплах ытти государствăсемпе тан мар йĕркере юлать. Çавăн пек йĕркеллĕ мар лару-тăрăва пĕтерни кирлĕ. Çакă мире юратакан мĕнпур халăхсен хăш-ĕмĕчĕсемпе килĕшÿллĕ. Германипе хăвăртрах мирлĕ договор тумасăр, Германи халăхĕн нациллĕ законлă интересĕсене тĕрĕс пурнăçласа пыма май туса пама çук.

Германипе мирлĕ договор туни Европăри мире тĕреклетес ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Германипе тунă мирлĕ договор тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пула тухса тăнă ыйтусене татăклăнах йĕркелесе çитерме май парать. Çав ыйтусене йĕркелесе Европăри гитлерла агрессирен инкек курнă государствăсем, уйрăмах Германипе кÿршĕллĕ государствăсем, хытă интересленеççĕ. Германипе мирлĕ договор туни тĕнчери лару-тăрăва пĕтĕмĕшпе лайăхлатма, çапла майпа çирĕп мир тума пулăшать.

Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатма çак сăлтав хушать: Германи милитаризмĕ икĕ хутчен тĕнчери вăрçăсене пуçарчĕ, халĕ Германи милитаризмне пĕтерен сĕклентерес хăрушлăх пĕтмен, мĕншĕн тесен Потсдамри конференцире йышăннă тивĕçлĕ постановленисем çаплах пурнăçа кĕмесĕр юлаççĕ. Германипе тунă мирлĕ договор Германи милитаризмĕ çĕнĕрен сĕкленессине тата Германи агрессиллĕ ĕç тăвассине сирсе ярассине пурнăçлама май парать.

Германипе мирлĕ договор туни Германи халăхĕшĕн мирлĕ пурăнмалли çирĕп условисем туса хурать. Германие, Потсдамри постановленисемпе килĕшÿллĕн, пĕрлехлĕ, никама пăхăнман, демократиллĕ тата мире юратакан государство пулса аталанма пулăшать тата Германи халăхне ытти халăхсемпе мирлĕ килĕштерсе ĕçлесе пурăнма май парать.

Çаксене шута илсе, Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританипе Франци Правительствисем пĕр пăхтаса тăмасăрах Германипе тумалли мирлĕ договора хатĕрлеме тытăнмашкăн решени йышăнчĕç.

СССР, США, Великобритани тата Франци Правительствисем мирлĕ договор хатĕрлес ĕçе пĕтĕмĕшлĕ Германи правительстви урлă Германи хутшăннипе тумалла тата Германипе тумалли мирлĕ договора çак никĕссем çинче тума кирлĕ тесе шутлаççĕ:

ГЕРМАНИПЕ ТУМАЛЛИ МИРЛĔ ДОГОВОРĂН НИКĔСĔСЕМ

ДОГОВОР ТУНĂ ÇĔРЕ ХУТШĂНАКАНСЕМ

Великобритани, Совет Союзĕ, США, Франци, Польша, Чехословаки, Бельги, Голланди тата Германие хирĕç пынă вăрçа хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе хутшăннă ытти государствăсем.

ПОЛИТИКĂЛЛА ПОЛОЖЕНИСЕМ

1. Германие çĕнĕрен пĕр государство туса хумалла. Çапла майпа Германи пайланса тăни пĕтет, пĕрлехлĕ Германи никама пăхăнса тăман, демократиллĕ, мире юратакан государство шутланса малалла аталанса пыма май илет.

2. Оккупаци держависен мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене мирлĕ договор вăя кĕнĕ кунранпа пĕр çулталăкран кая юлмасăр Германирен илсе тухмалла. Çакăнпа пĕрлех ют çĕршывсен çарĕсен Германи территорийĕнчи мĕнпур базисене пĕтермелле.

3. Германи халăхне демократиллĕ правăсемпе усă курма май туса памалла, закон тăрăх Германи гражданĕсем пулса тăракан мĕнпур çынсем, вĕсем мĕнле расa çынни пулнине, арçын е хĕрарăм пулнине, вĕсем мĕнле чĕлхепе калаçнине е мĕнле тĕне ĕненнине пăхмасăр, çын прависемпе усă курма, ирĕклĕ пурăнма, çав шутра сăмах ирĕкĕ, пичет, тĕн, политикăллă шухăш-кăмăл ирĕклĕхĕсемпе пухусем ирттермелли ирĕклĕхпе усă курма пултарччăр.

4. Германире демократиллĕ партисемпе организацисене ирĕклĕн ĕçлеме май памалла, вĕсене хăйсен шалти ĕçĕсене ирĕклĕн татса пама, съездсемпе пухусем ирттерме право памалла.

5. Германи территорийĕнче демократие тата мире сыхласа хăварас ĕçе тăшманла организацисене ирĕк памалла мар.

6. Ĕлĕк нимĕçсен çарĕнче службăра пулнă мĕнпур çынсене, çав шутра офицерсемпе генералсене ĕлĕк нацистсем пулнă мĕнпур çынсене, хăйсем преступлениллĕ ĕç тунăшăн суд приговор йышăннă тăрăх тĕрмере ларакансемсĕр пуçне, ытти мĕнпур нимĕç гражданĕсемпе пĕрле мире юратакан демократиллĕ Германи тăвас ĕçе хутшăнма гражданла тата политикăллă пĕр тан правăсем памалла.

7. Германи ăна хирĕç пынă вăрçа хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе хутшăннă кирек мĕнле державăна хирĕçле нимĕнле пĕрлешÿсене те, çар союзĕсене те кĕрес марри çинчен обязательство парать.

ТЕРРИТОРИ

Германи территорийĕ аслă державăсен Потсдамри конференцийĕн постановленийĕнче палăртнă чиксем пулать.

ЭКОНОМИКĂЛЛА ПОЛОЖЕНИ

Германин мирлĕ экономикине аталантарас ĕçре ним енчен те пÿлмелле мар йĕрке тумалла, çав экономика Германи халăхĕн пурнăçне лайăхлатса пыма пулăшмалла.

Германие ытти çĕршывсемпе суту-илÿ тăвас, тинĕссемпе усă курас, тĕнчери рынoксемпе сыхăнас енĕпе нимĕн енчен те пÿлмелле мар.

ÇАР ĔÇĔНЧИ ПОЛОЖЕНИ

1. Германие çĕршыва хÿтĕлеме кирлĕ чухлĕ хăйĕн нациллĕ хĕçпăшаллă вăйĕсене (тип çĕр çинчи çар, сывлăш-çарĕ тата тинĕс-çарĕ вăйĕсене) тытса усрама ирĕк памалла.

2. Германие çар материалĕсемпе техники тума ирĕк пареççĕ, анчах çав материалсемпе техника шучĕ тата вĕсем мĕнле пуласси Германие мирлĕ договор тăрăх хĕçпăшаллă вăйсем тытма ирĕк панă виçерен иртмелле мар.

ГЕРМАНИ ТАТА ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН ОРГАНИЗАЦИЙĔ

Германипе мирлĕ договор тунă государствăсем Германи хăйне Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн членне илме ыйтнине хÿтĕлеме килĕшеççĕ».

Гаскойн, О'Шонесси тата Брионваль господинсем асăннă нотăсене тата Германипе тумалли мирлĕ договорăн никĕсĕсен проектне хăйсен правительствисене парасси çинчен пĕлтернĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç уйрăм вырăнсенче çапăçаççĕ.

Хĕвелтухăçĕнчи сыран сывăхĕнче, Чхончжинь патĕнче, Халăх çарĕн чаçĕсем тăшманăн пĕр эсминецне шыва путарнă.

Паян тăшман самолечĕсем Вонсан, Нампхо тата Суньань районĕсене тапăннă. Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тăшманăн 6 истребительне персе ÿкернĕ.

Корея халăхĕ Америка империалисчĕсен тискер ĕçĕсене хирĕç протестлет

ПХЕНЬЯН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Америка интервенчĕсем Корейăпа Китай халăхĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте бактериллĕ хĕçпăшалпа усă кураççĕ, питĕ тискер ĕçсем тăваççĕ. Америка интервенчĕсем çавăн пек тискер ĕçсем тунине хирĕç Корея халăхĕ хытă протестлет.

Корейăн тĕп телеграф агентстви çакăн çинчен пĕлтерет: Корея Халăх çарĕн пĕр чаçĕнчи боецсемпе командирсен пухăвĕнче çар врачĕ Ким Дек Хван сăмах тухса каланă. США империалисчĕсем Корея халăхне хирĕç çапăçнă çĕрте бактериллĕ хĕçпăшалпа анлă усă курни Америкăри вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсем бактерипе усă курса вăрçма тахçантанпах хатĕрленнине кăтартса парать. Америка агрессорĕсем бактериллĕ хĕпăшалпа усă курнинчен Америка империализмĕн тискер сăнсăпачĕ тата уççăнрах палăрчĕ, тенĕ вăл.

Корея тĕп телеграф агентствин корреспонденчĕ Канвон провинцийĕнчи Ымхва уесĕнчен Китай халăх добровольцĕсен пĕр чаçĕнче пуху пулни, пухура Китай добровольцĕсем Америка агрессорĕсен тискер ĕçĕсене хирĕç протестлени çинчен пĕлтерет. Çав часть тăракан вырăна Америка самолечĕсем февраль уйăхĕнче бактерисем ертнĕ тĕрлĕ йышши хурт-кăпшанкăсем пăрахнă. Часть командирĕ Лю Цзи америкăнецсем пăрахса хăварнă шăвасене, пыйтăсене тата ытти хурт-кăпшанкăсене тĕпчесе сăнани çинчен, çавăн чухне вĕсене чума, холера тата шатра чирĕ бактерийĕсене (бациллисене) ертни палăрни çинчен каласа панă.

Америка агрессорĕсен тискер ĕçĕсене хирĕç протестлемелли пухусем нумай предприятисенче те иртнĕ.

Корейăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕçсыннисемпе Халăх çарĕн воинĕсем хăйсем йышăннă резолюцисенче çав тискер ĕçе организацилекенсене, Америка империалисчĕсен бактериллĕ хĕçпăшал пулăшнипе çынсене вĕлерсе пĕтермелли тĕллевĕсене пурнăçлакансене, тискер ĕçсем тăвакансене халăх сунне парса айăплама ыйтаççĕ.

Сарăлакан чирсене хирĕç кĕрешекен отрядсем Америкăн бактериллĕ хĕçпăшалне хирĕç анаççă кĕрешеççĕ. Пур çĕрте те халăха сарăлакан чир-чĕр ересрен сыхлакан прививкăсем тăваççĕ.

Америка самолечĕсем Пхеньян хули çине бомбăсем нумай пăрахнă

ПХЕНЬЯН, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине Америка интервенчĕсем Пхеньян хулин кăнтăрти пайĕ çине вĕççе пырса бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ. Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем тискеррĕн тапăннипе пула мирлĕ çынсен темиçе çурчĕ арканнă, халăх хушшинчен темиçе çын вилнĕ тата аманнă.

Америка самолечĕсем Пхеньян хули патĕнчи ялсене кашни кунах тапăнаççĕ, мирлĕ çынсен çурчĕсене тата çул çинче çÿрекенсене пулеметсемпе переççĕ, ялсем çине вут тивертекен шĕвек тултарнă баксем пăрахаççĕ. Çапла, мартăн 6-мĕшĕнче Америкăн реактивлă самолечĕсем кăçхине 5 сехет тĕлнелле Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи, Кандон уесĕнчи, Сичжон вулăçĕнчи Чансувон яле тапăннă. Çав ял çине Америка самолечĕсем вут тивертекен шĕвек тултарнă темиçе бак пăрахнă. Çавна пула пушар тухнă. Пушарта Пак Чже Ер хресченĕн çемйи—унăн арăмĕпе виçĕ пĕчĕк ачи сунса кайнă. Вутра нумай хресченсен ÿчĕсем пиçсе кайнă, чылай çынсем аманнă.

Америка самолечĕсем Вонсан, Нампхо хулисене тата ытти мирлĕ хуласемпе ялсене кашни кунах тапăнаççĕ.

БАКТЕРИЛЛĔ ХĔÇПĂШАЛПА УСĂ КУРНИНЕ ХИРĔÇ

ПЕКИН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет: Вьетнамри ĕç конфедерацийĕн генеральнăй секретарĕ Тран Дан Туйен Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине телеграмма янă, унта Америка агрессорĕсем Корейăри вăрçăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç протестленĕ. Телеграммăра, сăмахран, çапла каланă: Вьетнамри ĕççыннисен ячĕпе эпĕ Америкăн империалистла агрессорĕсен преступникла тискер ĕçне, вĕсем Корейăри вăрçăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç хытă тарăхса питлени çинчен пĕлтеретĕп. Çав халăха йышлăн пĕтермелли хĕçпăшала цивилизациллĕ пĕтĕм этемлĕх темиçе хутчен те питленĕ ĕнтĕ.

Совет хĕрарăмĕсем патне янă саламсем

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне— мартăн 8-мĕшне уявланă май Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешес тĕллевпе ĕçлекен комитечĕ урăх çĕршывсенчи хĕрарăмсенчен саламлă телеграммăсем нумай илнĕ.

Урăх çĕршывсенчи хĕрарăмсен демократиллĕ организацийĕсем Совет Союзĕнчи хĕрарăмсене хĕрÿллĕ тав тăваççĕ тата вĕсене миршĕн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн, тĕнчери мĕнпур халăхсен ачисен телейĕшĕн кĕрешнĕ çĕрте малашне те çитĕнÿсем туса пыма ырă сунаççĕ.

Корейăри демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕн председателĕ Пак Ден Ай янă телеграммăра çапла каланă:

«Пĕтĕм Корейăри хĕрарăмсен ячĕпе Сире—аслă Совет Союзĕнчи хамăрăн аппăсемпе йăмăксене—тусла хĕрÿллĕ салам яратăп. Совет хĕрарăмĕсем Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тата коммунизм строительствинче тунă паттăр ĕçсем тата вĕсем Тăван çĕршыва юратса кĕрешни Корейăри хĕрарăмсемшĕн—хăйсен Тăван çĕршывĕн пĕрлĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн, Америкăпа Англи интервенчĕсене хирĕç Отечественнăй вăрçă çĕкленнĕ хĕрарăмсемшĕн пример пулса тăрать. Корейăри хĕрарăмсем тăшмана хирĕç вăрçнă çĕрте татăклă çĕнтерÿ тăвасчченех кĕрешме хатĕр».

Чехословаки республикинчи, Венгри Халăх Республикинчи тата Румыни Халăх Республикинчи хĕрарăмсем совет хĕрарăмĕсене хĕрÿллĕ салам янă.

Совет Союзĕн аслă примерĕ халăх демократи çĕршывĕсенчи хĕрарăмсене çĕнĕ пурнăç тăвассишĕн кĕрешес ĕçре хавхалантарать.

«Эпир, Болгари хĕрарăмĕсем,—тенĕ Софийăран илнĕ телеграммăра,—сирĕнтен вĕренетпĕр, сирĕн примерпа хавхаланса, сире хамăр çĕршывра социализм тăвас ĕçре пĕтĕм вăя хурса, пĕтĕм хастарлăхпа, тăванла юратса ĕçлеме, миршĕн кĕрешме сăмах паратпăр».

«Монголи хĕрарăмĕсем,—тенĕ Монголи Халăх Республикинчи Ĕç хĕрарăмĕсен Центральнăй Совечĕн председателĕ Удвал ялă пуснă телеграммăра,—хамăрăн мĕнпур халăхпа пĕрле, Монголи халăхĕн революциллĕ партийĕ ертсе пынипе, совет халăхĕ кунтан-кун пулăшса пынипе, хамăрăн юратнă тăван çĕршыва вăйлатас ĕçре пысăк çитĕнÿсем тума пултарчĕç. Эпир хамăрăн юратнă çулпуçăмăр Чойбалсан маршал хушса хăварнисене пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешĕпĕр, хамăр çĕршывра социализм тăвас çулпа, хамăрăн шанчăклă тусна—аслă Совет Союзĕпе тытакан çирĕп туслăха пур майсемпе те тĕреклетсе пырас çулпа, нире тĕреклетессишĕн, хамăрăн ачасен телейлĕ те савăнăçлă пуласлăхĕшĕн кĕрешес çулпа пĕрмаях малалла кайса пырăпăр».

Демократиллĕ Германи Республикинчи хĕрарăмсем çапла çыраççĕ: «Хаклă тусăмăрсем, Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ— мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе чунтан-чĕререн салам яратпăр. Миршĕн тата этемлĕхĕн малашнехи ырлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре эсир пирĕншĕн пример пулса тăратăр. Совет халăхĕ нимĕç халăхĕпе туслă пурăнни Совет правительстви Демократиллĕ Германи Республикин правительстви янă çыру çине панă ответра тепĕр хут палăрчĕ. Çакă пире миршĕн тата хамăрăн тăван çĕршывăн пĕрлĕхĕшĕн тата активлăрах кĕрешме хушать».

Çавăн пек телеграммăсем Финляндири хĕрарăмсенчен, Итали хĕрарăмĕсен союзĕнчен, Америкăпа Совет Союзĕн туслăх обществин хĕрарăмсен комитетĕнчен тата ытти çĕртен те килнĕ. (ТАСС).

Матиас Ракоши 60 çул тултарнине уявлани

БУДАПЕШТРА ПУЛНĂ САВĂНĂÇЛĂ ЛАРУ

БУДАПЕШТ, мартăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Будапештра савăнăçлă лару пулнă. Ăна Венгрири ĕççыннисен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, Венгри республикин Министрĕсен Совечĕ тата Венгрири ĕççыннисен партийĕн Будапешт хула комитечĕ Венгрири ĕççыннисен партийĕн генеральнăй секретарĕ, Венгри халăхĕн çулпуçĕ Матиас Ракоши 60 çул тултарнине уявланă ятпа пухнă.

Президиума Матиас Ракоши Венгрири ĕççыннисен партийĕн Политбюровĕпе секретариачĕн членĕсемпе, Венгри правительствин членĕсемпе тата общественность представителĕсемпе пĕрле пырса кĕрсен, ларăва пухăннисем ăна чысласа тăвăллă алă çупнă.

Савăнăçлă пухăва Венгри Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕн председателĕ И. Доби уçнă, юбиляра салам каланă, вăл çĕнĕ Венгри тăвас ĕçре уйрăмах паллă пипĕ пысăк ĕçсем тунине палăртнă.

Çак уяв эпир аслă Сталина юратса пурăнассине тата унпа тачă çыхăнса тăрассине тата ытларах çирĕплетет. Вăл тăрăшнипе кăна Ракоши юлташа хортистла реакцин тĕрминчен ирĕке кăларса, ăна çăлса хăварнă, тенĕ Доби.

Аслă Сталина чысласа залри пĕтĕм халăх ура çине тăрса, тăвăллăн алă çупнă.

Ларура Венгрири ĕççыннисен партийĕн Политбюровĕпе секретариачĕн членĕ Эрне Герэ доклад тунă.

Матиас Ракоши 60 çул тултарнă ятпа ăна чысласа уявлани Венгрире пĕтĕм халăх юхăмĕ пулса кайрĕ, ĕççыннисем çак куна ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе уявлаççĕ, тенĕ Герэ.

Унтан Ракоши ячĕпе чылай çĕршывсенчи коммунистсен партийĕсемпе рабочисен партийĕсем янă саламлă телеграммăсене вуласа панă. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ Матиас Ракоши патне янă телеграммăра çапла каланă:

«Венгрири ĕççыннисен партийĕн генеральнăй секретарьне Матиас Ракоши юлташа.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен Партийĕн Центральнăй Комитечĕ Эсир 60 çул тултарнă кун Сире, рабочи класпа хресченсен ĕçĕшĕн пĕтĕм вăй-хала парса кĕрешекене, Венгрири ĕççыннисен партийĕн организаторĕпе хастарлă руководительне, халăхсем хушшинчи мире хÿтĕлессишĕн кĕрешекен паттăра хĕрÿллĕ саламлать.

Сире сывлăхлă пулма тата Венгри халăхĕн пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшса ĕçленĕ çĕрте çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырă сунатпăр.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен Партийĕн Центральнăй Комитечĕ.»

Ларăва пухăннисем каллех Совет Союзĕнчи большевиксен партине тата унăн çулпуçне аслă Сталина чысласа алă çупнă.

Унтан Матиас Ракошие Венгри Халăх Республикин рабочисемпе хресченсен, пионерсемпе çамрăксен тата хĕçпăшаллă вăйсен делегацийĕсем саламланă.

Лару хупăнас умĕн Матиас Ракоши сăмах тухса каланă.

Ракоши сăмахне тăвăллă алă çупса ырланă.

Савăнăçлă лару хыççăн пысăк концерт пулнă.

БУДАПЕШТ, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри Халăх Республикин Президиумĕ Матиас Ракошие Венгри халăхне ирĕке кăларассишĕн нумай çулсем хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн, Венгри Халăх Республикине тĕреклетес, аталантарас ĕçре, социализм тăвас ĕçре уйрăмах паллă чаплă ĕçсем тунăшăн, вăл 60 çул тултарнă май, Венгри Халăх Республикин пĕрремĕш степень орденĕпе наградăласси çинчен указ кăларнă.

Венгри хаçачĕсем Венгрири ĕççыннисен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Венгри Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕ Матиас Ракошие саламласа çырнă çырăва пичетлесе кăларнă.

Пур хаçатсем те ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ Матиас Ракошие вăл 60 çул тултарнă ятпа янă саламлă телеграммăна пĕрремĕш страницăсенче пичетленĕ.

БУДАПЕШТ, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Матиас Ракоши 60 çул тултарнине уявланă май паян Будапештра «Ракоши юлташăн пурнăçĕ» ятлă выставка уçнă.

Кубăри ĕçсем

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Гаванăран (Куба) пĕлтернĕ тăрăх, ĕлĕк Куба республикин президенчĕ пулнă Батист çара контроллесе тăрас ĕçе хăйĕн аллине илнĕ, унăн çарĕсем паян ирхине президент двореце йышăннă. Президент двореçĕ умĕнче кĕске вăхăт хушши тытăçусем пулса иртнĕ. Тытăçусем вăхăтĕнче 2 полицейские вĕлернĕ, темиçе çынна амантнă.

Батист çарĕсем полицийĕ Гавана хулин вăтаçĕрти пайне тата Кампо Колумби текен пысăк çар базине контроллесе тăни çинчен пĕлтереççĕ. Вĕсем тĕнчери çĕршывсен Ранчо Бойерос текен аэропортне те тытса илнĕ.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ çакăн çинчен пĕлтерет: Куба республикин президенчĕ Прио Сокаррас, Куба çинчи Кампо Колумби текен пысăк çар базине Батист тытса илнине пĕлсен, президент суртĕнчен тухса тарнă. Прио Сокаррaспа пĕрле салтаксен темиçе ушкăнĕ кайнă.

Грецин сакăр патриотне вĕлерме тăхтаса тăни çинчен Рейтер агентстви пĕлтерни

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греции юстици министрĕ Папаспиру çар командованине Грецин вĕлермелле суд тунă 8 патриотне—Белоянниспа унăн юлташĕсене вĕлерме тăхтаса тăма кăтарту панă.

Йĕлтĕрçĕсен „Чăваш Коммуни" хаçат парнисене илмелли эстафетăллă ăмăртăвĕн ПОЛОЖЕНИЙĔ

I.

Йĕлтĕрçĕсен «Чăваш Коммуни» хаçат парнисене илмелли эстафетăллă ăмăртăвне кашни çулах ирттереççĕ. Вăл хĕллехи спорт сезонне вĕçленĕ ятпа ирттерекен чи массăллă спорт мероприятийĕ пулса тăрать.

II.

Йĕлтĕрçĕсен эстафетăллă ăмăртăвĕ 1952 çулхи мартăн 16-мĕшĕнче, вырсарникун пулать. Ăмăрту Чăваш ялхуçалăх институчĕ çывăхĕнче (Етĕрне çулĕ) ирхине 11 сехетре пуçланать. Ăмăртăва хутшăнакан йĕлтĕрçĕсем 10 сехетре Пичет сурчĕ патĕнче (Володарски урамĕ, 5-мĕш сурт) пухăнаççĕ.

III.

Йĕлтĕрçĕсен эстафетăллă чупăвне ултă ушкăн тăрăх—ирĕклĕ спорт обществисемпе вĕренÿ заведенийĕсен, вырăнсенчи физкультура коллективĕсен (тĕрлĕ учрежденисемпе организацисенчи физкультурниксемпе физкультурницăсем), çамрăксемпе хĕрсен, арçын ачасемпе хĕрачасен командисем тăрăх ирттереççĕ. Йĕлтĕрçĕсен командисенче Шупашкарта пурăнакан физкультурниксемпе физкультурницăсем çес пулма тивĕçлĕ.

IV.

Стартпа финиш Чăваш ялхуçалăх институчĕн сурчĕ патĕнче, пĕр вăхăтрах виçĕ вырăнта (ирĕклĕ спорт обществисен, вĕренÿ заведенийĕсен тата вырăнти коллективсен; çамрăксемпе хĕрсен, арçын ачасемпе хĕрачасен командисем тăрăх) пулать.

V.

Командăсенчи участниксен йышĕ çакăн чухлĕ пулать: спорт обществисемпе вĕренÿ заведенийĕсен ушкăнĕ тăрăх 10-шар çын (пилĕк арçын тата пилĕк хĕрарăм), иккĕмĕш ушкăнра (виçĕ арçын тата икĕ хĕрарăм), ытти тăватă ушкăнри командăсем пилĕкшер çынтан тăмалла.

Ултă ушкăн тăрăх та старт пĕр вăхăтра параççĕ (пĕрремĕшпе иккĕмĕш ушкăнсенчи командăсем енĕпе пĕрремĕш этапа хĕрарăмсем, иккĕмĕшне—арçынсем каяççĕ т. ыт. те). Дистанцисене çакăн пек тунă: арçынсемпе çамрăксен—5-шер километр, хĕрарăмсемпе хĕрсен 3-шер километр, арçын ачасен—2-шер километр, хĕрачасен—пĕрер километр ăмăртса чупмалла.

VI.

Пĕтĕм дистанцие хăвăртрах чупса тухнă команда мала тухнă тесе шутланать.

VII.

Мала тухнă пĕрремĕш ушкăнри командăна куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав параççĕ, ытти ушкăнсенчи мала тухнă командăсене куçса çÿрекен вымпелсемпе парнелеççĕ.

VIII.

Йĕлтĕрçĕсен эстафетăллă ăмăртăвне хутшăнма ыйтса çырнă заявкăсене (вĕсене врач çирĕплетмелле) хулари физкультурăпа спорт комитетне 1952 çулхи мартăн 14-мĕшĕнчен кая юлмасăр тăратмалла.

Асăрхаттарни: Йĕлтĕрçĕсен эстафетăллă ăмăртăвĕпе сыхăннă ыйтусене 14—46 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлме пулать.

Йĕлтĕрçĕсен «ЧĂВАШ КОММУНИ» хаçат парнисене илмелли эстафетăллă чупăвне ирттерес тĕллевпе ĕçлекен оргкомитет.

Пĕлтерни

Мартăн 12-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн парткабинетĕнче иккĕмĕш çул вĕренекен политшкулсен руководителĕсен семинарĕ çак темăпа пулать: **«В. И. Ленин тата И. В. Сталин социализмран коммунизма куçмалли майсем çинчен вĕрентни».**

Семинара Я. Г. Железнов юлташ ирттерет.

* * *

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» пĕрремĕш çул вĕренмелли кружок руководителĕсем валли çак темăпа лекци пулать: **«Большевиксен партийĕ пĕрремĕш империализмлă вăрçă умĕн рабочисен юхăмĕ çĕкленнĕ çулсенче».**

Лекцие А. Ф. Сютруков юлташ вулать.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, мартăн 12-мĕшĕнче, чăвашла спектакль
«НАРСПИ»
Ыран, мартăн 13-мĕшĕнче, чăвашла спектакль
«КАШНИ КАШАКАХ АШ ТУРАМĔ ЛЕÇМЕСТ»
Мартăн 14-мĕшĕнче вырăсла спектакль
«ПОЮТ ЖАВОРОНКИ»
Спектакльсем каçхине 20 сехетре пуçланаççĕ.

«РОДИНА» КИНОТЕАТРТА
Паян, мартăн 12-мĕшĕнче, çĕнĕ илемлĕ фильм
«ПРЖЕВАЛЬСКИЙ»
Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-84, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00997 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.